К С(Чув)
Т88
Ч-36459

Валери ТУРКАЙ

# Турнатăр-ха!

Национальная библиотека ЧР
4-036459

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Хĕрĕмсене — ***СИЛПИПЕ ИЛЕМПИЕ*** — халаллатăп.



Валери ТУРКАЙ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

# Пурнатпăр-ха!

*Сăвăсем*

Шупашкар — 1999 çул

К 84.09(=Чув)6-5

УДК 894.344
ББК 84 (2 Рос=Чув) —5
Т 88

*Çак кĕнеке **«Инвест-Лад» строительство фирми** (Генеральнăй директорĕ— Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ **Валерий Николаевич Гордеев**) пулăшнипе кун çути курать.*

*Атăл тăрăхĕнче хăйĕн ăсталăхĕпе те хастарлăхĕпе ырă ят çĕнсе илнĕ çак сумлă фирма ĕçченĕсене тата уйрăмах **Валерий Николаевич Гордеева** çĕре çити пуçăма тайса тав тăватăп.*

Валери ТУРКАЙ.
Шупашкар. 1999 çулхи мартăн 3-мĕшĕ.

ПРОВЕРЕНО
20 г 14 СЕН 2017

ISBN 5-86765-118-5

© Издательство
«Чувашия», 1999

Ч-36459
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

* * *

*Çĕнĕ ĕмĕр!*
*Уçма хатĕрлен ман валли алăкна!*
*Кивĕ ĕмĕр!*
*Тултар ерипен уйрăлу куркине!*
*Пуласси!*
*Эпĕ хатĕр санпа тĕл пулма.*
*Эп сана палламастăп.*
*Анчах... юрататăп сана!*

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

*Эп — ялан тăвалла утакан Çулçӳревçĕ.*
*Эп— каçхи ĕнтрĕкре Çут Хĕлхем шыракан.*
*Утнăçемĕн хама вăйлăрах эп туятăп.*
*Эп пĕлетĕп: мана пур вăй-хал сунакан.*

*Кивĕ ĕмĕр, паллах, эс мана шеллемерĕн.*
*Хăш чухне çăмăл марччĕ пачах та мана.*
*Пурпĕрех эп сана сив сăмах каламастăп.*
*Эп ăнлантăм: çĕнет К ĕ р е ш ӳ ç ĕ кăна.*

*Эп ăнлантăм: Тĕнче — вĕçленми Вăрçă хирĕ.*
*Эп ăнлантăм: пур Каç, пур таса çутă Кун.*
*Пĕрисем хăйсене Усала парнелерĕç.*
*Усалпа пĕр чĕлхе тупаймарĕ ман Чун.*

*Эп ăнлантăм: Ыррин пулмалла питĕ тимлĕ.*
*Эп ăнлантăм: Ырри Усалран вăйлăрах.*
*...Эс, паллах, кивĕ ĕмĕр, мана шеллемерĕн.*
*Пурпĕрех сана тав, кивĕ ĕмĕр, тавах!*

*Çĕнĕ ĕмĕрте эп ç ĕ н ĕ л л е пурăнасшăн.*
*Эп курасшăн Усалăн хевти пĕтнине.*
*Эп кашни этемрен... пĕчĕк Турă тăвасшăн.*
*Эп курасшăн этем Телейне тупнине.*

*...Çĕнĕ ĕмĕр!*
*Уçма хатĕрлен ман валли алăкна!*
*Кивĕ ĕмĕр!*
*Тултар ерипен уйрăлу куркине!*

*19.10.96*

## КАҪКӐЛЁМ. ВИҪҪЁН

*Аннене*

Виҫҫӗн ларнӑ та лараҫҫӗ
Пӗрене ҫинче —
Виҫӗ карчӑк, виҫӗ тантӑш.
Виҫҫӗш — виҫ тӗнче.

Чи малтан сӳтсе яваҫҫӗ
Ҫӗн хыпарсене:
Мӗтрисен ҫухалнӑ хурӗ
Иртнӗ каҫхине.

Вӗҫелис мӑнуклӑ пулнӑ.
Мӗн тери телей!
Ҫӗн мунча туса пӗтернӗ
Тимӗрҫ Ёлӗкҫей.

Ҫӑвӗпе ҫумарӗ ҫумӑр.
Йывӑр ҫул кӑҫал.
Мӗн тӑвас тен — ҫӳл тӳпешӗн
Турӑ ҫеҫ — хуҫа.

Ҫӗршывра та йӗрке ҫук, ав.
Тем лӑпӑртатаҫ...
Тиливисӑрпа кӑтартрӗҫ,
Ай-тур-тур, ҫӗркаҫ!..

Халь камсем пурнаҫҫӗ лайӑх?
Вӑрӑ-хурахсем.
Ҫӗршыва та сутса ярӗҫ,
Чармасан, вӗсем.

Ав, паян та параймарӗҫ
Пенси укҫине.
Мӗн ҫисе пурӑнмалла тет
Пирӗн малашне?

Хулара мӗнле пурнаҫ-ши?
Хуть эпир кунта
Юр-вартан та татӑлмастпӑр,
Аш та пур кӑштах.

Ахальтен куҫмаҫҫӗ пулӗ
Хуларан яла.
Пирӗн ял та хула пулӗ
Ерипен капла.

Чи пахи — ан тухтӑр вӑрҫӑ.
Вӑрҫӑ тухмасан,
Халӑх ҫавӑрӗ-ха сывлӑш, —
Хӑй ҫине тӑрсан.

Мӗн, эпир нуша курман-и?!
Курнӑ, курман мар!..
Тав Турра — татах та пур-ха
Кӑмӑл пурӑнма!..

...Виҫҫӗн ларнӑ та лараҫҫӗ
Пӗрене ҫинче —
Виҫӗ тантӑш, виҫӗ карчӑк.
Виҫҫӗш — пӗр тӗнче.

*01.09.98*

## МАН ЫТАРМА ÇУК ЫРĂ ТА МАТТУР ЧĂВАШĂМСЕНЕ

Эй, эсир, чăвашсем!...
Чиперех-и, сывах-и?
Ир тăрсан,
Çĕнĕ Кун
умĕнче
пуç таятри?

Ир тăрсассăн,
Ĕçе
пикенсе
тар тăкатри?
Вăй-халран
катăк мар-и?
Ирĕкрех
пурăнатри,
Кĕлмĕçре
хур куратри?
Ыррине
Усалран
уйăрма
хăнăхатри?
Тĕрĕсе
Ултавпа
пăтратса
шар курмастри?

Эй, эсир, чăвашсем,
Чăваш Улăпĕсен
Халалне
астăватри?

Чиперех-и,
сывах-и?
Кăмăлсем
ăмăр мар-и?
Чĕрĕрте-Чунăрта
Шанчăк Вучĕ
сӳнмен-и?

Турăпа,
Хĕвелпе
килĕшӳллĕ
пурнатри?

Эй, эсир, чăвашсем!..
ЭП
СИРЕ
ЮРАТАТĂП!

*1996*

## ВӐЙЛИСЕМ... ВӐЙЛИСЕМШӖН!..

*Николай Ильич ИВАНОВА,*
*юратнӑ юлташӑма*

Вӑйлине — Вӑйлин Кунҫулӗ.
Вӑйлисем — сахал.
Пурӑнни — тем мар Вӑйлишӗн;
Кӗрешни — паха.

Вӑйсӑрришӗн Тӑвӑл — вилӗм.
Вӑйсӑрри ялан
Лӑпкӑ та тӳлек пурнасшӑн...
Вӑйсӑр пулнӑран.

Вӑйлисемшӗн Тӑвӑл — вӑйӑ.
Тӑвӑлра Вӑйлин
Уҫҫӑнраххӑн, савӑкраххӑн
Янӑрать кулли.

Вӑйлисемшӗн пӗтӗм пурнӑҫ —
Тӑвалла утни.
Вӑйлисемшӗн пӗтӗм пурнӑҫ —
Ялкӑшса ҫунни.

Вӑйлине — Вӑйлин Кунҫулӗ...
Вӑйлисем, сире
Турӑсем савса упраччӑр
Ӗмӗр-ӗмӗрех!

*09.11.97*

## ЭПИР — ЧĂВАШСЕМ...

*Юрăна, юлташăма*

Эпир — чăвашсем — пĕр-пĕрне шеллеместпĕр.
Эпир питĕ лайăх пĕлетпĕр çакна:
Кам вăйсăр — çавна шелленçи тукалаççĕ.
Шеллеççĕ — пĕлместĕн пулсан хăв хакна.

Эпир вара вăйлă! Чăнах эпир вăйлă!
Кашни чăвашра Улăп юнĕ вылять!
Кирлех-тĕк, эпир тĕнчене кисрететпĕр!
Кирлех-тĕк, пӳлетпĕр эпир Атăла!

Анчах та эпир шеллеме те пĕлетпĕр.
Шеллетпĕр эпир сĕмсĕр çичĕ юта.
Вăл Улăп Йăхне тĕп тумашкăн шут тытнă.
Пире тĕп тăвас текен пулнă пайтах!..

Кам вăйсăр — çавна шелленçи тукалаççĕ.
Апла-тăк, туссем, пурте вăйлă пулар!
Эпир — чăвашсем — пĕр-пĕрне ю р а т а т п ă р!
Пире пĕр-пĕрне шеллени кирлĕ мар!

*27.02 — 01.03.99*

# ЧĂВАШ ЕНĔН ЕРТӐҪИСЕНЕ

*П. В. Ивантаева*

Хисеплĕ пуҫлăхсемĕр!.. Эп сире,
Эсир пĕлетĕр, хăш чухне ятлатăп.
Ку пĕртте килĕшмест, паллах, сире.
Анчах та эпĕ — пурпĕрех ятлатăп.

Сире ятламасан, тата к а м а
Ятламалла тет пирĕн — йăпанмалăх?
Эсир — пире ертсе пыракансем.
Эпир вара — сире ҫуратнă халăх.

Эп ăнланатăп: пĕртте ҫăмăл мар
Тилхепене Тытаканни пулмашкăн.
Саманисем те ку чухне пачах
Памаççĕ лăпкă, канлĕ пурăнмашкăн.

Пĕлсе пĕтер — кама ĕненмелле? —
Кам хыççăн утмалла иккĕленмесĕр?
Пĕрне итлетĕн — тĕрĕс сăмахлать.
Тепри те калаçмасть пек ним пĕлмесĕр...

Ятлаççĕ пурте халь пуҫлăхсене.
Ыттисенчен, ав, эпĕ те юлмастăп.
Эп... ятласса ятлатăп та сире...
Анчах та эп сире усал сунмастăп.

Ку ҫеҫ-и — эп шеллетĕп те сире!..
Мĕн-ма тесессĕн, эп ҫакна пĕлетĕп:
Ертӳҫĕсемсĕр халăх — халăх мар.
...Кăна эсир те, ман шутпа, пĕлетĕр.

Хисеплĕ пуҫлăхсемĕр, тен, сиртен
Мĕн килнинчен ытла темех килмест-тĕр...
Анчах эсир маттур та харсăр чух
Эпир те хамăр вăйлине сисетпĕр.

Апла-тăк, пулăр — халăхпа пĕрле!
Хăвра ҫуратнă халăхран ан писĕр!
Ан манăр: халăх пĕтĕмпех курать.
Кам — халăхсăр, ҫав чăннипех телейсĕр.

Хиселлĕ пуçлăхсемĕр!.. Эп сире,
Эсир пĕлетĕр, малашне те ятлăп.
Ку малашне те килĕшмĕ сире.
Эп малашне те пулмăп ырă ятлă.

Анчах  эсир тăван халăхпала
Пĕр тĕллевпе, пĕр сукмакпа утсассăн,
Эсир Тăван Çĕршывăмăр чысне
Çӳле çĕклес тесе çине тăрсассăн,

Эсир тертре те инкекре ялан
Çынпа та халăхпа пĕрле пулсассăн,
Тата эсир, мĕнле калас, пире
Пуш сăмахпа кăна тăрантмасассăн...

Ун чух эпех тулли кăмăлăмпа,
Таса чунăмпала сире пуç тайăп.
Ун чух эпех «Ертӳçĕмĕрсене —
Мухтав та чыс!» тесе мăнаçлăн калăп.

*22.01.99*

## САСĂ

Мана хăш чух сăнран паллаççĕ.
Хăш чух паллаççĕ сассăмран...
«Туркай-и?» — теççĕ. «Çавă», — тетĕп,
Улталама сăлтав çукран.

«Калатпăр çав: чат эсĕ! — теççĕ —
Сассу ытла та паллă сан».
«Паллийĕ-мĕнĕ», — текелетĕп
Эп, пит сăпайлă çын пулса.

«Радиопа итлетпĕр, — теççĕ. —
Аван вулатăн сăввуна...».
«Сăвви хăямата та, — теççĕ, —
Сассу пырса тивет чуна».

...Эх, Пурнăç, Пурнăç! — Тĕлĕнтермĕш!..
Пин Çын — пин Кăмăл, пин Тĕнче.
Пĕрин Поэзире — телейĕ.
Теприн — пачах урăххинче.

Иккен ПУРИН ТЕ пур хăй хакĕ.
Ман сассăм та, ав, такама
Чăтма-тӳсме вăй-хал парать-мĕн,
Вăй-хал парать-мĕн пурăнма.

...Мана хăш чух сăнран паллаççĕ.
Хăш чух паллаççĕ сассăмран.
«Туркай-и?» — теççĕ. «Çавă», — тетĕп.
Туннин пĕрех усси çукран.

*22.02.97*

## АСАИЛӐ

Эп ку редакцире тахҫан ӗҫленӗ.
Вунтӑххӗртаччӗ эпӗ ун чухне.
Мана — юратнӑ, эпӗ те — юратнӑ
Ун чух кунти чипер пикесене.

Ун чух эп хам та пӗртте хальхи марччӗ.
Ҫунса тӑратчӗҫ хӑмӑр куҫӑмсем.
Туйра йывӑҫҫи пек эп яштакаччӗ.
Ҫӑра та кӑпӑшкаччӗ ҫӳҫӗмсем.

Ун чух эп, чӑн та, пӗртте хальхи марччӗ.
Кӑраччӗ эп ун чух ытлашшипех.
Эп йӗксӗке куҫран «эс — йӗксӗк!» теттӗм,
Лармастӑм юнашар кӗҫҫепитпе.

Ун чух тӗнчи те — урӑхла тӗнчеччӗ.
Хури — хураччӗ. Шурӑччӗ — шурри.
Пире такам таҫта ертсе каятчӗ.
Кӗрлетчӗ ир те каҫ Мухтав Юрри.

Журналистсен ялан мухтамаллаччӗ —
Саманана, Влаҫа, Пулассине...
Парсассӑн ирӗк, хурлама юратчӗ...
Влаҫ кӑмӑлне кайман кӑлтӑксене.

Тӗнчи ун чух та пӗртте лӑпкӑ марччӗ:
Нейтрон бомби... Вьетнам... Афганистан...
Йӗри-тавра — «усал, тискер тӑшманччӗ».
Анчах эпир — «утаттӑмӑр малта!».

Хӑш чух редакци ҫурчӗ кисренетчӗ —
Эпир хӗрсе, сиксе тавлашнӑран.
Пӗри калатчӗ: «Тӗрӗс пурӑнатпӑр!».
Тепри — кулатчӗ ҫеҫ ку шухӑшран.

Хӑш чух... сыпаттӑмӑр. Эрех — шыв пек юхатчӗ!
Редакци хӑйччӗ — пирӗн ресторан.
Тост хыҫҫӑн — тост... Унтан пуҫлатпӑр юрӑ...
Пуҫлӑхсене ятлаттӑмӑр кайран.

Шалу-тавраш, чăн та, пысăк марччӗ.
Анчах... паратчӗç вăхăтра ăна.
Хăйне кура аванччӗ Совет Влаçӗ —
Выçса вилме памастчӗ вăл çынна.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Çапах та — темшӗн лайăхчӗ çав вăхăт!..
Çапах та — темшӗн, çак Çурта кӗрсен,
Ман чунăмра таса та ырă Тунсăх
Çунать Çурта çути пек хӗмленсе.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Эп ку редакцире тахçан ӗçленӗ.
Вунтăххăртаччӗ эпӗ ун чухне.

*09.03.97*

**ИККĔМĔШ МИКУЛАЙ ПАТШАНА ТАТА УНĂН ÇЫВĂХ ÇЫННИСЕНЕ ПИТĔРТЕ ПЫТАРНИНЕ КУРНĂ ХЫÇÇĂН (1998 ÇУЛХИ ИЮЛĔН 17-МĔШĔ) ÇЫРНĂ САВĂ**

... Пĕр çылăх каçрĕ...
Пысăк çылăх.

Кăштах çăмăллăнрах тапать чĕрем.

*17.07.98*



Ч-36459
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

## ÇАВ УЛĂПСЕМ ПУРТАН

*Г. Н. Волкова*

*«Тăвалла пулсан та — малалла».*
*Г. Н. ВОЛКОВ*

Ун чух Чăваш пулни — инкекчĕ.
Чăн-чăн Чăваш пулни — пушшех.
Пиртен кулатчĕç. Çул памастчĕç
Пире... Чăваш пулнишĕнех.

Сӳнме пуçланă Çăлтăр евĕр
Чăваш Сăмахĕ тĕттĕмре
Ун чух аран-аран çиçетчĕ.
Влаçсем калатчĕç: «Сӳнтĕрех!»

Влаçсем вĕсем — влаçсем. Вĕсемшĕн
Çук Халăх, çук Чĕлхе... Вĕсем
Ялан темĕскертен хăраççĕ.
Вĕсен — хăйсен саккунĕсем.

Ун чух пурин те ПĔР ТĔЛЛЕВЧЧĔ.
Ара, инçех те мар, умра
Коммуна Çурчĕ хĕмленетчĕ.
Ун чух Коммунăччĕ сумра.

Анчах, пире вĕрентнĕ тăрăх,
Чăваш Чĕлхи Коммунăра
Иккен пачах та кирлĕ мар-мĕн.
Унта УРĂХХИСЕМ шутра.

...Çапла пурнаттăмăр...Чĕлхемĕр
Нуша куратчĕ тăп-тăмал.
Ун чух нумайăшĕ Чăвашшăн
Çĕн Кун килессине сунман.

...Çапах та пурччĕ, пурччĕ, пурччĕ
Ун чух та пурччĕ Чăвашсем!
Вĕсем пурри — хăйех — Телейччĕ.
Вĕсемччĕ — ПИРĔН УЛĂПСЕМ.

Çав Улăпсем пуртан вилмерĕ,
Сӳнмерĕ Шанчăк Чăвашра.
Çав Улăпсем пуртан паян та
Вăй-хал тапса тăрать чунра.

Çав Улăпсем пуртан нихçан та
Чăваш Хĕвелĕ сӳнес çук.
Çав Улăпсен ятне нихçан та
Эпир асран кăларас çук.

...Апла — ПУРНАТПĂР-ХА, ПУРНАТПĂР!
Утма тивсен те тăвалла,
Апла — тек каялла чакмастпăр...
Утсам, Чăваш, ут малалла!

*02.08.97*

## АТНЕР ХУСАНКАЯ

Çапах та тав сана, Атнер!
Çапах та тав сана —
Хӑтланнӑшӑн улӑштарма
Тахçан самантана.

Ан тив, эпир шутланӑ пек
Пулмарӗ пӗтӗмпех.
Темскер таçта кӑштах, Атнер,
Çапах та улшӑнчех.

Çапах Чӑваш Тӗнчи паян
Сывлать ирӗклӗрех.
Чӑваш Сӑмахӗ те паян
Янрать çирӗппӗнрех.

Чӑваш Çӗн Ёмӗр Алӑкне
Уçма хатӗрленет.
Савӑнӑçра та хурлӑхра
Вӑл чӑвашлах пуплет.

Çапах та тав сана, Атнер!
Çапах та тав сана!..
...Эп килӗшетӗп: ку йӑлтах —
ПУÇЛАМӐШӖ кӑна.

Эп килӗшетӗп: Çӗнӗ Кун
Çуталасси — малта.
Эп килӗшетӗп: санпа ман
Кӗрешмелли — пайтах...

Çапах та тав сана, Атнер!
Çапах та тав сана —
Хӑтланнӑшӑн улӑштарма
Тахçан самантана.

*30.01.99*

**ХЫРАЙ ЁНЕЛТЕН**
**ШУПАШКАРА ТАВРĂННĂ ЧУХ**
**ÇĔРПӲ ХУЛИ ТĔЛĔНЧЕ**
**ÇЫРНĂ CĂВĂ,**
**е каллех ÇАВ ЫЙТУ пирки**
**пуçăма ватни**

Çĕрпӳ.
...Ăçта Çĕрпӳ,
унта — Пинпӳ.
Ăçта — Пинпӳ,
унта — Ĕмпӳ...

Анчах та çук-çке-ха
Пинпӳ!..
Анчах та çук-çке-ха
Ĕмпӳ!..

Анчах та çук
Ĕмпӳ...

Юрать-ха пур
Çĕрпӳ.

*09.11.98*

## ÇАВРАÇИЛ-98

Çаврăнать
Çавраçил,
çаврăнать...

Çавраçил
варринче —
ёмĕтсем.
Çавраçил
варринче —
шанчăксем.

Çавраçил
варринче —
шăпасем,
Çавраçил
варринче —
сурансем.

Çаврăнать
Çавраçил,
çаврăнать...

*05.03.98*

## ХАЛĂХ

Халăх!..

Халăх —
ăслăран та ăслă,
ухмахран-ухмах.

Халăх —
ырăран та ырă,
усалран-усал.

Халăх!..

*23.09.98*

## ЯТСĂР СĂВĂ

Вĕсен
          ялавĕ
                    мĕншĕн
                              хĕрлĕ?

Вĕсем
юн
нумай
юхтарнă.

Вĕсен
          ĕçĕ
                    мĕншĕн
                              ăнмасть?

Вĕсем
юн
нумай
юхтарнă.

Вĕсем
          мĕншĕн
                    ялан
                              тулашаççĕ?

Вĕсем
юн
нумай
юхтарнă.

Вĕсенчен
          мĕншĕн
                    Турă
                              риснĕ?

Вĕсем
юн
нумай
юхтарнă.

*09.11.97*

## РАҪҪЕЕ

Эх, Раҫҫей, намӑс мар-и сана?..
Тӗнчене хӑвӑнтан култаратӑн.
Эс вӗт ылтӑн ҫинче пурӑнатӑн!..
Ылтӑнне ҫич ютран тархаслатӑн.

*13.12.96*

## ТĂВĂЛ УМĔН

Тăвăл
умĕн
темшĕн
лăпкă
уйрăмах
тĕнче.

Тăвăл
умĕн
темшĕн
тимсĕр
уйрăмах
этем.

Тăвăл
умĕн
темшĕн
тăвăр
сăвăçшăн
тĕнче...

*05.10.96*

## РАÇÇЕЙ-98: ЧУХĂНСЕН ЮРРИ

Эпир ырă пурнăç курма çуралман.
Эпир яланах çуклăхпа кĕрешетпĕр.
Эпир яланах тем кĕтетпĕр. Анчах...
Анчах та кĕтсе илейместпĕр.

Ĕçлетпĕр эпир. Тăрăнса аниччен
Ĕçлетпĕр эпир — кунĕн-çĕрĕн.
Ĕçлетпĕр пулсан, мĕншĕн чухăн эпир?
Ма çăкăр чĕлли те çук пирĕн?

Эпир ырă пурнăç курма çуралман.
Эпир çуралман п у р ă н м а ш к ă н.
Çуралнă эпир такама тăрантма.
Такам умĕнче пуç таймашкăн.

Эпир никама та сунмастпăр усал.
Эпир çыннăнне хапсăнмастпăр.
Парсамăр пире — хамăра тивнине!
Эпир çакна çеç тархаслатпăр.

Парсамăр пире, этемле пурăнса,
Ачамăрсене çул уçмашкăн!
Кам усрĕ сире малашне тăрантса,
Енчен те вĕсем пулмасассăн?

Енчен те вĕсем пулмасан, малашне
Кам ĕçлĕ хирте, кам юхтарĕ
Тарне — заводра, станоксем умĕнче?
Кам сирĕншĕн чаплă çул сарĕ?

Енчен те вĕсем пулмасан, малашне
Эсир чĕртнĕ Вăрçă Кăварĕ
Кама чи малтан хыпса çăтĕ? Кама?..
Кама вăл тискеррĕн çунтарĕ?!

...Парсамăр пире хамăра тивнине!
Эпир çакна çеç тархаслатпăр.
Эпир никама та сунмастпăр усал.
Эпир çыннăнне хапсăнмастпăр.

*05.09.98*

## КАРАПСЕМ

*Л. П. Куракова*

Тинĕсре путакан карапсен асапне
Тинĕсре путакан карапсем ҫеҫ пĕлеҫҫĕ.
Эп сире ăнланатăп, ПУТСА КУРНИСЕМ.
Ма тесессĕн, эп хам сахал мар путса курнă.

Ма тесессĕн, эп хам — ТИНĔСРЕ ҪӐРЕКЕН.
Ма тесессĕн, эп хам Тинĕспе вăй виҫетĕп.
...Эп тахҫан шикленеттĕм сиртен, тăвăлсем.
Анчах халь, тăвăлсем, эп сире юрататăп.

Эп — ПУТСА КУРНĂСКЕР. Ҫавăнпа эп сире,
Тинĕсре путакан карапсем, ăнланатăп.
Эп — ПУТСА КУРНĂСКЕР. Ҫавăнпа эп сире,
ПУТАКАН КАРАПСЕМ, ПУЛĂШМАШКĂН
ВАСКАТĂП.

*16–31.07.97*

## К. М. А.

Эс
мана
«Эс — Халăх Чунĕ!»
тетĕн.

Çапла,
эп, чăн та, —
Халăх Чунĕ.

...Аманнă Халăхăн
аманнă Чунĕ.

*23.11.97*

* * *

Эп
ÇУТĂ
илсе килнĕччĕ.

Эсир —
усă курас темерĕр унпала.

Эп
ĂШĂ
илсе килнĕччĕ.

Эсир —
«капла та ăшă!» терĕр пулмалла...

Эп
ШАНЧĂК
илсе килнĕччĕ...

Эсир...

*26.03.97*

## МĔТРИ ЮМАНА

***Палăк вырăнне***

Ан тив, хисеп те, чыс та ан курам...
*МИТТА*

I.

Тахçан тусем, хирсем кисреннĕ —
Чăваш ярса пусмассерен.
Тахçан мĕнпур тĕнче киленнĕ —
Чăваш Сăмахĕ илтĕнсен.

Тахçан, Чăвашăн Хурçă Хĕçĕ
Хаяррăн, сиввĕн хĕмленсен,
Усал-тĕсел чăл-пар саланнă,
Пăчланнă çăткăн тăшмансем.

Тахçан, çурхи ĕçсем пĕтсессĕн,
Вĕçĕ-хĕррисĕр улăхра
Мăнаçлă, ирĕклĕ, хăватлă
Чăваш киленнĕ вăйăра...

Анчах Кунçул тени — каварлă.
Кунçул — çич кукăр, çич тумхах.
Эс, тар тăкса, суха тăватăн.
Çумра — шăлне хăйрать хурах.

Инкек тени пĕччен çӳрет-и?..
Сахал-им каскăн тĕнчере?..
Йĕри-тавра — улать выç кашкăр...
Суран çине суран — ӳтре...

Йĕри-тавра — кăвар та тĕтĕм.
Йĕри-тавра — куççуль те юн.
Малта — асаплă сивĕ тунсăх.
Малта — хĕвелсĕр, тĕксĕм Кун...

II.

Сан пек тата кам ăнланса-ши
Хăй халăхне, Мĕтри Юман?..

Сан пек тата кам шеллесе-ши
Хӑй халӑхне, Мӗтри Юман?..
Сан пек тата кам ыр сунса-ши
Хӑй халӑхне, Мӗтри Юман?..
Сан пек тата кам юратса-ши
Хӑй халӑхне, Мӗтри Юман?..

III.

Хисеп те, чыс та эс курмарӑн.
Ялан хурлатчӗҫ сан ятна.
Пур ӑҫтиҫук тапаҫланатчӗ
Варалама сан Сӑнарна.

Хисеп те, чыс та эс курмарӑн.
Ют алӑ хупрӗ сан куҫна.
Анчах эс пур — паян та чӗрӗ.
Манмарӗ халӑх сан ятна.

Паян кӑна-и — чӗрӗ пулӑн,
Хисеплӗ пулӑн эс ялан.
Пурах, пур — Халӑх Пархатарӗ!
Мухтав та чыс сана, Юман!

*04.10.98*

* * *

Хамăрăннисемех-çке-ха!..
Анчах та — ют!
Анчах та ют-çке-ха —
Хамăрăннисемех!..
Тĕллевĕмĕр — пĕр-çке-ха!
Тĕллевĕмĕр — пĕр.
Ытла та ют-çке-ха —
«хамăрăннисемех»!..

*09.02.96*

* * *

Пăтранать Чăваш Тĕнчи, пăтранать.
Ырăпа Усал Вăрçи вăйланать.
Чĕре хыççăн çĕн чĕре аманать.
Пăтранать Чăваш Тĕнчи, пăтранать.

Ырăпа Усал Вăрçи вăйланать.
Чăваша чăваш сутать, улталать.
Чăваша чăваш таптать, путарать.
Тӳпере хура çăхан явăнать.

Пăтранать Чăваш Тĕнчи, пăтранать.
Ырăпа Усал Вăрçи вăйланать.
Тӳпере хура çăхан явăнать.
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

*24.11.96*

## ИСТОРИ СУЧĔ УМĔНЧЕ

Чăваш чĕлхин палачĕсем,
тăрсамăр!
Истори Сучĕн Куçĕнчен
пăхсамăр!

Эй, эс —
ишĕлекен имперен харсăр хуралçи,
хăвна Халăхсен тĕрминче
патша пек туякан ăçтиçук,
чĕтретĕн?!
Эй, эс — çемçе пуканшăн
аçу-аннŭ пилленĕ Чĕлхене
сутса пурăнакан йăх-ях,
чĕтретĕн?!
Эй, эс тата —
«чăваш! чăваш!..
мухтав сана, чăваш!..» — текелесе,
«çŭле хăпаракан» хастар,
чĕтретĕн?!

Чĕтрĕр!

Истори Сучĕ умĕнче
чĕтрĕр!

...Чăваш Чĕлхишĕн çапăçса
пуç хунă Улăпсем,
куçăрсене уçсамăр!
Курсам, Атилла,
кур, Кубрат,
Алмуш-патшамăр, кур,
курсамччĕ, Иван Якăльч, кур:
паян Чăваш Чĕлхин тăшманĕсем
явап тытаççĕ сирĕн умăрта!

Çунтар, питле йĕксĕксене,
Кăвар Чĕреллĕ Çеçпĕл!
Калах, кала хăв сăмахна,
Сăвапллă Кĕçтенттин!
Элкер! Митта!
Ăçта эсир?

Ăçта эс, Хусанкай?
Паян Чăваш Чĕлхин тăшманĕсем
явап тытаççĕ сирĕн умăрта!

...Чăваша
Халăхсен тĕрминче
усракансене —
намăс!

Чăвашла калаçман чăвашсене —
намăс!

Ачине-пăчине
чăвашла вĕрентмен чăвашсене —
намăс!

Чăваш Чĕлхине вилĕм сунакансене —
намăс!
намăс!
намăс!

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Чăваш Чĕлхин палачĕсем,
тăрсамăр!

*03.04.97*

## ВĂХĂТ ÇИТРĔ!

Вăхăт çитрĕ урăлмашкăн,
Куçсене уçма!
Вăхăт çитрĕ кар тăмашкăн,
Çĕршыва çăлма!

Хурахсен хура эшкерĕн
Мăшкăлне тӳссе
Тек пĕр кун та пурăнмастпăр!
Çитĕ шикленсе!

Вăхăт çитрĕ каламашкăн
Татăклă сăмах:
Кирлĕ мар пире, «патшамăр»,
Кунашкал «çăтмах»!

Кирлĕ мар пире, «хуçамăр»,
Эс те паянтан!
Сахал мар эс улталарăн,
Култăн халăхран.

Тăвансемĕр! Çитрĕ вăхăт
Çĕн çулпа утма!
Вăхăт çитрĕ кар тăмашкăн,
Çĕршыва çăлма!

*06.09.98*

* * *

Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..
Ир тăратăн та пуçлатăн
Хĕвĕшме-тĕрткелешме.
Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..

Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..
Вăранса ĕлкĕрейместĕн,
Çывăрма выртма тивет.
Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..

Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..
«Тăвалла утатăп», — тетĕн.
Хăв утан анаталла.
Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..

Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..
Эс ă н а «Савниçĕм!..» тетĕн,
В ă л «Кĕсйŭ сан шăтăк!» тет.
Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..

Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..
Шуррине «хура — вăл!» теççĕ,
«Шурă!» теççĕ хурине.
Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..

Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..
Ухмаха «вăл — ăслă!» теççĕ,
«Ăссăр!» теççĕ ăслине.
Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..

Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..
Ирĕн-каçăн çаратаççĕ
Çукка юлнă халăха.
Пурнăç мар — абсурд театрĕ!..

*25.09.98*

## ТĔРĔСЛЕВ

Автобус чарăнчĕ.
Каллех
билет, ак, тĕрĕслеççĕ.
Билет, паллах, пурин те пур.
Çапах та
тĕрĕслеççĕ.

Кама
шанмаççĕ?
Тен,
мана?..
Тен, ман кўрше шанмаççĕ?..

Кама шанмаççĕ-и?
С а н а,
ман Халăхăм,
шанмаççĕ.

*08.11.98*

* * *

Шырах, шыра Идеална, Поэт!
Тен, тупăн-ха, тен, тупăн эс Ăна...
Çапла — сана никам та ăнланмасть,
Çапла — юри пӳлеççĕ сан çулна,

Çапла — хăш чух эс, «Идеал!» тесе,
Пуçна таятăн пач урăххине,
Çапла — эс аманатăн та тинех
Туйса илетĕн хăв йăнăшнине,

Çапла — хăш чух, чуну кӳтсе çитсен,
Эс аллуна сулан тĕнче çине,
Çапла — эс пуринчен те ытларах
Пĕлетĕн çын епле вăйсăррине...

Çапла! Çапла!.. Çĕр хут, пин хут — çапла!
...Анчах, Поэт... шыра Идеална!
Никам та ан шыратăр, эс шыра!
...Эс тупмасан, кам туптăр-ха Ăна?!

*30.03.97*

## ТАВЛАШУ

*А. Шагарова*

Эсир илтсе-ши е илтмен-ши?..
Анчах та иртнӗ каҫхине
Эп илтрӗм иккӗн питӗ хытӑ
Сиксе, хӗрсе тавлашнине.

Камсем тавлашрӗҫ?.. Хуравлатӑп.
Тавлашаканӗсем — ҫаксем:
Пӗри — Ӑс-Тӑн, тепри вӑл — Туйӑм.
Эп — ларакан итлесе.

«Эп кирлӗрех!.. Эп пулмасассӑн, —
Тесе калать Ӑс-тӑн, хӗрсе, —
Этем тени пурнатчӗ халь те,
Хӑй мӗлкинчен хӑй шикленсе.

Эп пулмасан, этем паян та
Ҫӳретчӗ — чукмарне йӑтса.
Эп пулмасан, этем пурнатчӗ —
Ҫаплах чулран вут кӑларса.

Эп пур та — пурте пур этемӗн!
Мана пула вӑл ӳлӗмрен
Пушшех те вӑйлӑ, сумлӑ пулӗ!
Хуҫа вӑл пулӗ тӗнчере!..».

«...Сана пула эппин? — тет Туйӑм. —
Эс кирлӗрех эппин?.. Айван!..
Этем малтан т у й м а вӗреннӗ.
Ш у х ӑ ш л а м а вара — кайран!

Кӑвайт умне этем м а ларнӑ?
Ӳт-пӗвӗ хытӑ шӑннӑран!
М а сунарта вӑл асапланнӑ?
Ытла та выҫӑ пулнӑран!

Ма, шӑпчӑк сассине илтсессӗн,
Этемӗн чунӗ савӑнать?
Этем пурӑнаймасть Илемсӗр?
Этем Илемшӗн пурӑнать!

Эп кирлĕрех! Э п пулмасассăн,
Этемĕн чунĕ халиччен
Кĕрхи тĕнче пек тĕлĕретчĕ —
Кичем те тăвăр Çĕр çинче!..»

«...Сан шăпчăкун сасси — самантлăх! —
Чĕрре кĕрет Ăс-Тăн çаплах. —
Этемĕн утасси — малта-ха!
Йăнăшасси те ун — пайтах.

Эп, мĕн курмастăп-им — куратăп:
Э с пăтрататăн этеме!
Сана пула нуша курать вăл!
Çакна эс тивĕçлĕ пĕлме!

Тин çеç вăл тĕрĕс пурăнатчĕ.
Утатчĕ çирĕппĕн мала.
Эп, çул уçса, малта пыраттăм...
Арканчĕ йăлт сана пула!..

Каллех вăл такама савать, ав.
Каллех вăл маннă хăй камне.
Каллех ун пĕр сăмах — «Савниçĕм!..»
Вăл алă сулнă ман çине...

Эп çеç, эп çеç ăна май парăп
Çак çут тĕнчен Хуçи пулма!..
Каларĕ тейĕн, çитĕ вăхăт —
Пăрахĕ вăл тунсăхлама!..»

«...Этем тунсăхлама пăрахĕ?! —
Тет Туйăм, чăн та тарăхса. —
Этем тунсăхлама пăрахĕ —
...Этем пулмашкăн пăрахсан!!

Этем вăл савăнма çуралнă!
Этем çуралнă юратма!
Ун пĕтĕм пурнăçĕ — самантлăх!
Ан чар ăна эс п у р ă н м а!..».

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Эх, еплерех вĕсем тавлашрĕç —
Туйăмпала Ăс-Тăн — çĕркаç!..
...Çынсем мана каланă тăрăх,
Вĕсем... паян та тавлашаç.

*04–06.01.99*

## 1996 ÇУЛХИ ÇУРКУННЕ ПАРИЖА ÇИТСЕ КУРНĂ ХЫÇÇĂН ÇЫРНĂ СĂВĂ

Висла урлă,
Одер урлă,
Эльба урлă
каçрăм эп.
Тухăçра
тахçан пулсаччĕ.
Анăçра
пулманччĕ эп.
...Эп куратăп та:
Хĕвел вăл
пур çĕрте те —
Хĕвелех.
Эп куратăп та:
Этем те
пур çĕрте те—
Этемех.

Тухăçра та,
Анăçра та
пур Хаваслăх,
Хурлăх пур.
Анăçра та,
Тухăçра та
Ырату пур,
Ĕмĕт пур.
Пур çĕрте те,
пур çĕрте те
кунĕн-çĕрĕн
Ĕç вĕрет.
Пур çĕрте те,
пур çĕрте те
Ç ĕ р иртсессĕн,
К у н килет.

Пур çĕрте те
пур

Иртнийĕн
чĕрĕ Ахрăмĕ.
Тата
пур çĕрте те
пур Пуласлăх,
Юрату та пур, паллах.
Тухăçра та,
Анăçра та
Çын
шанать те ĕненет.
Анăçра та,
Тухăçра та
Çын
ялан Телей кĕтет.

...Эльба урлă,
Одер урлă,
Висла урлă
каçрăм эп.
Тухăçа
тахçан курсаччĕ.
Анăça
курманччĕ эп.

*14.04—17.05.96*

* * *

Тытап та каятăп Йошкар-Олана!
Мана Шупашкар йăлăхтарчĕ!
Йошкар-Олари туссемпе тĕл пулсан,
Эп тунсăхăма манаканччĕ.

Тытап та каятăп эп, ак, Хусана!
Хусан ют хула-им, мĕн, маншăн?
«Рахим итегез!» — тейĕç ман тусăмсем.
«Салам!» — тейĕп эпĕ манăçлăн.

Тытап та каятăп эп, ак, Чĕмпĕре!
Тăван хула пек маншăн Чĕмпĕр!
Эп калăп: «Мана килĕшет Чĕмпĕр Ен!..».
Туссем мана калĕç: «Пĕлетпĕр!».

Тытап та каятăп эп, ак, Ёпхĕве!
Туссем манăн пур Ёпхӳре те!
«Салам!» — тейĕп эп, — Салават çĕршывне!»
«Килех! — тейĕ вăл. — Эп кĕтетĕп»!

Тытап та каятăп Йошкар-Олана!
Унтан Хусана эп каятăп!..
Каймастăп ниçта та!.. Санах, Шупашкар,
Санах эп чунтан юрататăп!

*15.11.98*

* * *

*Виталий Гордеева*

Муркашра тахçанах эп пулманччĕ.
Килĕшет мана темшĕн Муркаш.
Муркашсем — питĕ паттăр та харсăр.
Муркашсем — ăшă пиллĕ, йăваш.

Муркашра тахçанах эп пулманччĕ.
Халь куратăп та — ак тамаша!
Йăлт çĕнелнĕ кунта, чиперленнĕ!
Паллама та май çук Муркаша!

Йăлт çĕнелнĕ кунта, илемленнĕ!..
Пур Муркашшăн хĕвеллĕ малаш.
Муркашсем, ĕçĕрсем сирĕн ăнччăр!
Такăр пултăр çулу сан, Муркаш!

*27.11.98*

## СĂВĂÇ

Питех  те ĕçлисенĕн хушшинче
Вăл пĕртте курăнмасть ĕçчен çын пек.
Вăл киленет черченкĕ чечекпе.
Вăл калаçать каçхи çăлтăрсемпе.

Вăл çĕр çинчех утса çӳрет, паллах.
Вăл пурăнать, паллах, çынсем пекех.
Хурлантарсассăн, вăл та хурланать.
Савăнтарсассăн, вăл савăнатех.

Çынсем пекех вăл йăнăшсем тăвать,
Ӳкет, тăрать, ялан таçта васкать...
Çапах та...  темшĕн... вăл — урăхларах...
Çапах та... темшĕн... СĂВĂ вăл çырать...

Çапах та темшĕн, темшĕн уйрăмах
Ăнах савать те пăхăнать Сăмах...

*16.09.98*

# ЭП

«А эсӗ — питӗ кăткăс çын».
*ИЛТНИНЧЕН*

А эп —
темле те!..
Йăваш та эп,
кăра та!
А эп —
темле те!..
Эп ырă та,
усал та!
А эп —
темле те!..
Эп ăслă та,
айван та!
А эп —
темле те!..
Чее те эп,
кăнттам та!
А эп —
темле те!..
Çуралнă та —
пурнатăп!
А эп
пурне те
телей кăна
сунатăп!

*21.01.99*

## ЧĂРСĂРЛĂХ

Никама
пăхăнман
çын
пулма

Пур-и
май,
çук-и
май —
пурпĕрех

Эп
вăй
çитнĕ
таран
тăрăшатăп

Никама
пăхăнман
çын
пулма.

*15.09.98*

**ИОСИФ ДМИТРИЕВА —**

**Вĕрентекенĕме, Юлташăма —**
**инçетри Акмола хулине унти**
**вырăс драма театрĕн**
**тĕп режиссерĕ пулса ĕçлемешкĕн**
**кайма пуçтараннăскерĕмĕре**

Иосиф! Иосиф! Иосиф!
Иосиф! Мĕнле- ха капла?..
Талант Чăвашра кирлĕ мар-шим?!
Нумай-шим Талант Чăвашра?!

Иосиф, кала-ха: мĕскершĕн
Чăваш юратмасть Чăваша?
Чăвашăн Тĕнчи, тен, пит хĕсĕк?
Тен, тăвăр пире Чăвашра?

Иосиф, кала-ха: Тĕллевĕ
Çуках-шим Чăвашăн ку чух?
Тĕллевсĕр — ăçтан-ха? мĕнле-ха?..
Тĕллев, тем, тесен те, кирлех!

Иосиф! Иосиф!.. Тен, каймăн?..
Тен, юлăн, Иосиф?..
К у н т а,
К у н т а Талантсем питĕ кирлĕ!
Чăваш Чăвашра кирлĕрех!

*08.01.97*



4 — Заказ № К-1502

## АРÇУКА

Эп, Арçук, сана пĕлетĕп.
Эс, Арçук, мана пĕлен.
Эп пĕлеп: эс тĕлĕнетĕн.
Эп те питĕ тĕлĕнеп.

Тĕлĕнеп — этем телейлĕ
Пурăнма пĕлменнинчен.
Тĕлĕнеп... Тĕлĕннĕçемĕн...
Пурăнмашкăн вĕренеп.

Эп, Арçук, халь тин ăнлантăм:
Пирĕн пурнăç — вăйă мар.
Ай мĕн чухлĕ эп çухатрăм —
Тин çакна ăнланнăран.

Мĕн пурри — йăлтах — çынра-мĕн.
Йăлт — çынра, çын чĕринче.
Пĕтĕмпех çынран килет-мĕн —
Çын к а м а ĕненнинчен.

Пĕрисем калаççĕ: *пурнăç*
Этеме тискерлетет.
Пурнăç çеç-ши, пурнăç çеç-ши?..
Эп — кăштах иккĕленеп.

Эп, Арçук, çакна куратăп:
ЫРĂ пурпĕр вăйлăрах!
Эс çакна шанса пурнатăн.
Эп çакна шанса пурнап.

...Эп, Арçук, сана пĕлетĕп.
Эс, Арçук, мана пĕлен.
Эп пĕлеп: эс ĕненетĕн.
Эп те, тусăм, ĕненеп.

*18.05.96*

## ЭСИР ВАРА?..

Хăрарăм эп...
Кĕтмен-туман çĕртен
эп...
хамран хам хăрарăм.

Хăрарăм эп
хамри
усаллăхран.

Эп ырă çын тесе хама шутлаттăм.
Эп
халĕ те
хама шутлатăп ырă çын тесе.

Анчах
манра та
пур иккен...
усал.

Хăрарăм эп...

Э с и р вара?..

*03.08.98*

* * *

Телей те,
Айӑп та —
пӗрле.

К а м
айӑпсӑр?
К а м
ку тарана ҫитсе
пӗрре те айӑпа кӗмен?..

Апла пулсан ан айӑплӑр, ан ятлӑр —
айӑпа кӗрсе,
самантлӑха Телей тупнисене!

*07.01.98*

## ХУРАВ

Каллех — ӳпкев... Каллех — ятлаҫҫӗ...
Иккен... «Эп — чапшӑн», «мулшӑн — эп».
«Юлташсене сутатӑп» эпӗ.
Кӗскен: чи путсӗр ҫын вӑл — эп.

Епле вӗсем п ӗ л с е ӗҫлеҫҫӗ!
Вӗсем пӗлеҫҫӗ ман чуна
Епле хуҫмаллине. Пӗлеҫҫӗ
Тӗксӗмлетмешкӗн ман Куна.

Ҫапла, яваплӑ эп. Яваплӑ
Кашни чӗрешӗн, чуншӑн!.. Эп
Йӑлтах курма-туймашкӑн тивӗҫ!..
Анчах та... Турӑ мар-ҫке эп!

Ҫапла, эп вӑйлӑ, питӗ вӑйлӑ!
Ҫапла, мана Тӳпе савать!..
Анчах... — ӑҫтан-ха эп?.. епле-ха?..
Мана хама к а м ӑнланать?!

...Кӳрентӗм-и?.. Паллах, кӳрентӗм.
Эп, мӗн, ҫын мар-им? Эп те ҫын.

*16.08.97*

## ЭП ПУР ТА...

Эп пур та — мана тем тума та сире халь юрать:
мана йӑнланмасӑр «йӑнлантӑм» теме,
мана шеллемесӗр «шеллетӗп» теме,
мана ӗненмесӗр «ӗнентӗм» теме,
мана юратмасӑр «саватӑп» теме...

Эп пур та — мана йӑнланмастӑр эсир.
Эп пур та — мана шеллеместӗр эсир.
Эп пур та — мана ӗненместӗр эсир.
Эп пур та — манран хӑтӑласшӑн эсир...

Эп пур та...

*19.05.95*

## ХАЛЬХИ ÇĔРМЕ ПУЯНСЕНЧЕН ПĔРНЕ

Халăхăмăр чухăн та выçă чухне
Эс çаплах мулупа мухтанатăн.
Эс чăнах та пуян, пит пуян.
Ма тесен, эс п и р е çарататăн.

Мул пухма эс пĕлетĕн, паллах.
Ма тесен, çаратма эс пĕлетĕн.
...Эп шеллетĕп, мăнтарăн, сана!
Ма тесессĕн, ятна эс çĕртетĕн.

Ма тесессĕн, эс халăх юнне,
Сĕлĕх пек, кунĕн-çĕрĕн ĕметĕн.
Ма тесессĕн, эс çын куççульне,
Нишлĕскер, юхтарса иртĕнетĕн.

Çитĕ вăхăт — эс тытăн явап.
Тытăнах!.. Эп çакна ĕненетĕп!
Эп шеллетĕп, мăнтарăн, сана!..
Сана мар... сан ч у н н а эп шеллетĕп!...

*22.01.99*

## ИУДА

Эп Иуда пĕр çынна чуп тунине курсаччĕ...
Çапла, Иуда вилĕмсĕр, туссем.
«Иуда мар — таса та ырă гений!» —
Тесе шутларăм эпĕ, тĕлĕнсе.

Епле илемлĕ сăмахсем каланчĕç!..
Кашни сăмахĕ — ылтăн та мерчен.
Ĕмĕрлĕхе савма сăмах вăл пачĕ.
«Пĕрле пурнасчĕ, — терĕ, — виличчен».

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ку сăвва Иуда вулас çук та...
Пурпĕрех çыратăп эп ăна.
...Тимлĕрех пулсамччĕ, Вулаканăм!
Ан ĕнен, ан шан Иудăна!

*02.01.97*

## ЫРАТĂВĂМĂН ВИÇĔ СĂВВИ

I

Пĕрисем паян хаваслă питĕ.
Тĕнчере паян темле уяв.
Эп тахçан уявсене саваттăм.
Ман асра паян — çинçе пăяв.

Ман асра паян — Кану та Канлĕх.
Кам хаваслă — кайтăр уява.
Эп каймастăп вĕсемпе, каймастăп!
Эп паян каясшăн... Канăва.

Вăл таçта пурах-çке-ха, пурах-çке!
Канмаллах-çке çыннăн, канмаллах!...
К а н м а л л а... Канмашкăн вăхăт çитнĕ...
К а й м а л л а... Эп пур — ларап кунтах...

Эп... к у н т а н каймашкăн та хăратăп.
Пĕлчĕр пурте — эп хăравçине!
Эп у н т а мĕн кĕтнине пĕлместĕп...
Эп пĕлеп у н т а каймаллине...

Каймалла... Анчах ă ç т а?!
...Пĕлместĕп.
Канмалла... Анчах ă ç т а?!
М ĕ н л е?!

II

Каллех — хура...
Йăлтах — хура...
Хĕвел — хура...
Тӳпе — хура...
Йăлтах — хура...

Хура — ман пит...
Хура — ман куç...
Хура — ман кăмăл...
Йăлт — хура...

Хула — хура...
Çынсем — хура...
Тĕнче — хура...
Йăлтах — хура...

Хура — çак хут...
Хура — çак ир...
Хура — çак сăвă...
Йăлт — хура...

Хура...
Каллех — хура...
Йăлтах — хура...

III

Ман чĕреме кăшлать пĕчченлĕх хурчĕ...
Тискер çав хурт. Вăл шеллеме пĕлмест.
Чĕрем! Чĕрем!
Вуткайăкăм!
Никам та, пĕлсем, сана никам та шеллемест!

Ах, пурнăçăм!
Ыратăвăм... Асапăм...
Самантлăха çуталнă ялтăрав...
Мĕне шанса эс тĕттĕмре çиçетĕн?
Кама эс кирлĕ, каласам, кама?

Ĕненĕвĕм... Çут шанчăкăм...
Тархасшăн, тархасшăн, хăпăр ман çумран!
Тархасшăн, хуть эсир мана ан суйăр!
Эп никама та ĕненместĕп тек...

Мана никам та шеллемест, пĕлетĕп.
Эп никама та кирлĕ мар текех...
Эс кăлăхах, чĕреçĕм, лăпланмастăн...
Хура чаршав пуçларĕ хупăнма...

Ман чĕреме кăшлать пĕчченлĕх хурчĕ.
Пĕчченлĕх хурчĕ хăй ĕçне пĕлет...

*27.12.96*

## ЧУНРИ

Ёнер кăна вăл ман юлташччĕ.
Паян вăл — ман «усал тăшман».
Ёнер вăл алтăр пушататчĕ
Ман çирĕп сывлăхшăн. Паян...

Паян тар юхтарса хăртать вăл,
Ăçта çитет унта, мана.
Паян ман ятăма таптать вăл.
Никам та чараймасть ăна.

...Хурлатăр. Хăрттăр. Эп — чăтатăп.
Мĕн тăвăн — манăн чăтмалла.
Вăл каçару мĕнне ан пĕлтĕр.
Ман — пурпĕрех каçармалла.

Хурлаччăр. Хăрччăр. Эп — тӳсетĕп.
Эп — Сăвăç. Манăн — тӳсмелле.
Тата... Тата — кăштах пулин те
Ман... пурăнма вĕренмелле.

*05.03.97*

## ЭПИГРАММА ВЫРĂННЕ

Сана шелленĕ чухлĕ кама шеллес-ха ман?
Çынна сунмастăн ырă, савмастăн эс çынна.
Чĕрӳ чулланнă санăн, юну пăрланнă сан.
Çапах хăв каçăртатăн хăш чух çук кăкăрна.

Сывалмалла сан, тусăм, сипленмелле часрах —
Ч у н у сан чирлĕ, тусăм, чунна сан çăлмалла.
Сан пĕтĕмпех малта-ха, эс — «пуçĕпех пĕтмен».
Мĕнрен пуçламалла-и?... Ç Ы Н Н А ЮРАТМАЛЛА!

*09.11.97*

## КУҪҪУЛЬ

Ман,
паллах,
халь
выртса
макӑрассӑм
килет...

Эпӗ,
тен,
халь
выртса
макӑраттӑмччӗ пуль —

куҫӑмра
тӑрса
юлнӑ
пулсассӑн
куҫҫуль.

Куҫӑмра
тӑрса
юлнӑ
пулсассӑн
куҫҫуль.

*25.10.97*

## ПАТТĂРСЕМ

Паттăрсем паттăра ăмсанмаççĕ.
Çĕнтерӳ тутине-масине
Туйнисем питĕ лайăх пĕлеççĕ
Çĕнтерӳ мĕн хака ларнине.

Кĕрешмесĕр май çук çĕнтермешкĕн.
Кĕрешӳ Вутĕнче пиçнисем
Çĕнтерӳçĕсене... тав тăваççĕ.
Ма тесен, вĕсем курнă çĕнсе.

Паттăрсем мухтанмашкăн пĕлмеççĕ.
Çĕнтерӳ юратмасть вĕçкĕне.
Çĕнтерес-тĕк çĕнтер эс илемлĕн.
Е... çул пар хăвăнтан вăйлине.

Паттăрсем паттăра ăмсанмаççĕ.
Кĕрешсе, вăй виçсе курнисем
Паттăрсен умĕнче пуç таяççĕ.
Ма тесен, вĕсем курнă çĕнсе.

*28.06.97*

## ПĔЛЕСЧĔ

Юлташлă пулман эпир нихăçан та.
Анчах тăшмансем те пулман.
Эп хам сукмакпа мал енне ăнтăлатăп.
Эс хăв çулупа мал енне талпăнан.

Эп хам сукмакпа мал енне ăнтăлатăп.
Эс хăв çулупа мал енне талпăнан.
Сана ăнăçу эп, тăванăм, сунатăп.
Мĕскер-ши, пĕлесчĕ, мана эс сунан?

*09.XI.98*

* * *

«Çĕнтертĕмĕр!» — терĕр пулас...
Çапла, тавлашмастăп, — çĕнтертĕр.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

«Çĕнтерĕвĕр» йӳçĕ-им пит?..
Неушлĕ х а л е х ӳкĕнетĕр?!

*09.11.97*

## ПĔРНЕ — УРĂХ НИЕПЛЕ ТЕ ХУРАВЛАЙМАНРАН

Эс манран ан кул, тăванăм.
Эп санран кулса курман.
Эп сана Телей сунатăп.
Эс мана мĕскер сунан?..

Эс манран ан кул, тăванăм...
Телейӳ сан — енчĕкре.
М а н ă н ав... Хăвах куратăн:
Юлашки чĕл — килĕмре.

Эс — маттур. Пĕлсе пурнатăн.
Эс, паллах, манран кулан.
Эп ч у н а таса усрасшăн.
Эс, ав, «простă пурăнан».

Эс — «иллюзисем тумастăн».
Эс вĕçместĕн пĕлĕтре.
Эс ялан укçа тăватăн.
Эс ялан хĕрӳ ĕçре.

...Турă пулăштăр, тăванăм,
Турă пулăштăр сана
Яланах хастар пулмашкăн,
Ӳстермешкĕн пурлăхна.

Çакна çеç ан ман, тăванăм:
Пурнăç — Пурнăç вăл, ыран
Тем кĕтет пире, пĕлместпĕр...
Çавăнпа та эс паян
Пурăн, савăн, пуй — пуймашкăн
Хăвату çитет пулсан...
Чи пахи — ан кул çынран!

*25.05.96*

* * *

Çак тĕнчере пур пĕр масар.
Вăл — ...юлташсен масарĕ.
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Çапла, «вилеççĕ» юлташсем.

«Вилеççĕ» юлташсем —
Юлташлăх вилнĕçемĕн.
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Юлташăмсен масарĕ умĕнче
Эп каçару ыйтатăп Турăран
Сире, юлташăмсем,
Çăлма май тупайманшăн.

*21.11.97*

* * *

Çухатрăм.
Анчах ӳкĕнместĕп.
Кунтан та ытла — ман чĕре,
Усал тыткăнран тухса тарнăн,
Тинех киленсе хĕмленет.

Çухатрăм.
Юрать-ха çухатрăм.
Тинех эпĕ ирĕклĕ халь
Санран, икĕпитлĕ юлташăм,
Тата сан суя куллунтан.

Çухатрăм.
Анчах ӳкĕнместĕп.
Ку çеç-и — Турра тав тăвап.

*05.04.97*

## СĂЛТАВ

Сăлтавĕ пур...
Пурин те пур — Сăлтавĕ.
Сăлтавсăр нимĕн те пулмасть.

Сăлтавсăрах çак Тĕнчене туман-тăр.
(Тумасăрах пулман пулсассăн вăл...).
Сăлтавсăрах Хĕвел те хĕмленмест-тĕр.
(Хĕмленмеллех апла пулсассăн ун).
Сăлтавсăрах çак Çĕр те çаврăнмасть пуль.
(Çаврăнмаллах апла пулсассăн ун).

Сăлтавĕ пур та — пăсăлать çанталăк.
Сăлтавĕ пур та — уяртать каллех.
Сăлтавĕ пур та — ыратать ман чунăм.
Сăлтавĕ пур та — чунăм савăнать.

Сăлтавĕ пур та — çырăнать çак сăвă.

Сăлтавĕ пур.
Пурин те пур — Сăлтавĕ.
Сăлтавсăр нимĕн те пулмасть.

*09.01.99*

## ВИТАЛИЙ ФИЛИППОВА

Ӗнер мана, тăванăм, эсӗ... çăлтăн.
Ӗнер çунатăм усăннăччӗ ман.
Ӗнер эп пӗр пӗччен тăрса юлсаччӗ.
Ӗнер ман кăмăл çукчӗ пурăнма.

Ӗнер эп пӗр пӗччен тăрса юлсаччӗ.
Вӗретчӗ пурнăç ман йӗри-тавра.
Мана кăна тек ним те кирлӗ марччӗ.
Пӗр шухăш çеçчӗ манăн пуçăмра...

Сасартăк санăн сассуна эп илтрӗм,
— Килсем... Пур ӗç... Курса калаçмалла...
Унтан мана эс алăк уçса кӗртрӗн.
Унтан эс чăмăртарăн ман алла...

Мана эс йăпатмашкăн тăрăшмарăн.
Эс каламарăн «ăслă сăмахсем».
Эс пурӗ те... йăлтах-йăлтах ăнлантăн.
Эс пурӗ те... йăл култăн, эп кӗрсен.

Ӗнер мана, тăванăм, эсӗ çăлтăн.
Эс пулмасан, пӗлместӗп, эп ӗнер...

*16.01.99*

* * *

Ҫĕкле пуҫна, ҫĕкле пуҫна, юлташăм!
Аманнă кăйкăрăм, ҫĕкле пуҫна!
Эпир санпа ниме тăман сураншăн
Пуҫа усса лармашкăн ҫуралман!

Эс, тен, шутлатăн: сана ҫеҫ халь йывăр,
Эс, тен, шутлатăн: пĕтĕм ҫут тĕнче
Санпа вăйне виҫсе пăхма шут тытнă...
Юлташăм, питĕ йăнăшатăн эс!

Юлташăм, кур-ха: таврара мĕн чухлĕ
Асаплă сăн, куҫҫуль, ӳпкев, инкек...
Пĕрин ури ҫук, ҫук теприн алли, ав...
Тепри — усал... (ку — инкекпе пĕрех).

Эс сывă-и, юлташăм?.. Сывă, сывă!..
Чуну таса-и?.. Эп пĕлеп — таса.
Ах, юрату-ҫке!.. Юрату вăл — Тертсĕр,
Сурансăр, Вутсăр... Юрату та мар!

Юлташăм, кур-ха: сар хĕрсем килеҫҫĕ...
Эс кур-ха, кур: епле вĕсем чипер!
Кала кăна — чи илемли сан пулĕ!
Кала кăна — телейлĕ пулăн эс!

...Эс сывă-и, юлташăм?.. Сывă, сывă!
Чĕрӳ вĕри-и?.. Ан тунсам — вĕри!..
Апла пулсан, ҫĕкле пуҫна, юлташăм!
К У САВМАСАН, САВАТЬ ПИРЕ Т Е П Р И!

*25.12.96*

## ВЛАДИМИР СУРКОВА

**1996 çулхи çу уйăхĕн 23-мĕшĕнче
«Шанчăк» радиокăларăмра
çак сăвă авторĕ пирки ырă
сăмахсем каланăшăн тав туса**

Тавах, Володя! Тав сана!
Ăнланнăшăн тавах!
Мухтанинчен пин хут паха,
Тăванăм, ăнланни.

Ўпкелешместĕп эп, анчах
(Ма пытарас?) çитмест,
Çитмест мана та ыр сăмах,
Çитмест шута хуни.

Те самани ытла тўрккес?..
Те яланах таçта
Васканăран, эпир ку чух
Манатпăр Чун пирки.

Тавах, Володя! Сан ăшшу
Ман чунăма сиплет.
Сан ырă, ăслă самаху
Мана вăй-хал парать.

...Мухтанинчен пин хут паха,
Юлташăм, ăнланни.
Усал чунли — ăнланаймасть.
Усал — усал сунать.

Тавах, Володя, тав сана!
Ăнланнăшăн тавах!

*23.05.96*

## ВЯЧЕСЛАВ ХРИСТОФОРОВА

Пĕлетĕр-и, эп халь — çĕрме пуян!
Мана юлташ... хуткупăс парнелерĕ.
Ма пытарас — эп савăнтăм чунтан.
Хам телее эп хам та ĕненмерĕм.

Халь пур пике те манăн, тусăмсем!
Эп халь, туссем, юрлатăп та кулатăп!
Эп халь çӳретĕп утса мар, вĕçсе!
Эп сан çине, халь, тунсăхăм, суратăп!

Кама кичем унта? кам чĕринче
Сӳнме пуçланă Шанчăк та Хаваслăх?
Кам шар курать Инкек танатинче?.. —
Ман патăма килсемĕр йăпанмалăх!

Эп халь, туссем, чăнах, — çĕрме пуян!
Мана юлташ хуткупăс парнелерĕ.

*08.02.98*

## ИВАН ПЕТРОВИЧ ТАРАТИНА — АКАТУЙСЕМПЕ САБАНТУЙСЕН ПАТТӐРНЕ — ЮЛТАШЛА

Ӑҫта тата камран тарать Таратин?
Тарать  Таратин хӑй телейӗнчен.
Телейӗнчен ӑҫта тарать Таратин?
Кӑна Таратинран ыйтсамӑр хӑйӗнчен!

*04.03.97*

## КĔРЕКЕ САВВИ

*М. Каюкова*

Те — ĕçсессĕн — лайăх?
Те — сыпса парсан?..
Çитесси пулать-ши
Килĕме кайран?

Питĕ шеп симпылĕ!
Эреххи те шеп!
Кун пекех пăхсассăн,
Эп татах килеп!

Ĕнтĕ кăмăл тулчĕ.
Ĕнтĕ йăлт умра.
Ĕнтĕ ĕçрĕм-çирĕм —
Сĕннине кура.

Таймапуç, тăванăм!
Таймапуç, пускил!
Пурсăра та çиттĕр,
Тăвансем, ман Пил!

Те — ĕçсессĕн — лайăх?
Те — сыпса парсан?
Ай, епле çитес-ши
Килĕме халь ман?..

*18.03.97*

## РЕСТОРАНТА

*Л. М. Григорьева*

Блюз.
Саксофон.
Шап-шурă çÿçлĕ музыкант.
Официант
тинкернĕ
тӳпене.

Официант
хăй ăçтине те
маннă.

Шăпанасем те
ерипен
шăпланчĕç.

Кĕлпуххинче
пирус
сӳнет.

Нихçанхинчен те
канлĕрех
Çунаççĕ
çуртасем...

Блюз.
Саксофон.
Чунсем.

*25.05.96*

## КАНУ

Кану та — Ĕç.
Канма та — пĕлмелле.
Канма — пушшех те пĕлмелле!
Канма пĕлетĕн — ĕçлеме пĕлетĕн.
Апла пулсан — пĕлетĕн ПУРĂНМА!

*09.01.99*

## МИХАИЛ ЯКОВЛЕВА

«Красота спасет мир».
*Ф. М. ДОСТОЕВСКИЙ*

Художник!
Кала-ха:
ăçтан
ку Сăнар?
Ăçтан
ку тĕссем,
ку Асамлăх?
Тин çеç ним те çукчĕ-çке
ку пир çинче!
Тин çеç эс, Художник,
ахаль çын кăначчĕ!

Художник!
Кала-ха, тархасшăн, кала:
М ĕ н п е
Тĕнчене
эс куратăн?
Пурне те курма-ăнланма çăмăл мар.
Эс пур — пурпĕрех пĕтĕмпех асăрхатăн...

Художник!
Кала-ха:
мĕскер вăл — Илем?
Ма чун савăнать,
Илемпе тĕл пулсассăн?..

...«Çак Çут Тĕнчене Илем çеç çăлаять»...

Художник, пĕлсем:
ТĔНЧЕНЕ ЭС ÇĂЛАТĂН!

*23.12.96—04.03.97*

## КĔРКУННЕ. АРАПУÇ

Мана килĕшет ку çара кĕркунне.
Мана килĕшет çакă хурăн.
Ку хурăн — ман тунсăхлă кăмăлăм пек.
Ку хурăн — ман тунсăхлă Юррăм.

Мана килĕшет çак йĕпе юр пĕрчи.
Мана килĕшет çакă пĕлĕт.
Ку пĕлĕт — ман шанчăксăр ĕмĕтĕм пек.
Ку пĕлĕт — ман сасăсăр Кĕллĕм.

Мана килĕшет шăнса кӳтнĕ çак ял.
Мана килĕшет çакă шăплăх.
Ку шăплăх — мана чĕнекен Сасă пек.
Ку шăплăх... Ку шăплăх... Ку шăплăх...

*16.10.96*

* * *

Ӳпкелешмесӗр, шӑппӑн кайрӗ
man тусӑм чӑн ҫӗре.
Тӗнче ыратӑвне
хӑй витӗр
кӑларчӗ ун чӗри.
«Шӑпи ҫапла-тӑр, — терӗҫ пурте, —
йӑлт — Турӑ аллинче...»
«Шӑпи ҫапла-тӑр...», — терӗм эп те
ҫӗн тупӑк умӗнче.

Шӑпи ҫапла-и, ҫапла мар-и... —
К а й н и хӑрушӑ мар.
Хӑрушӑ — сан ӗмӗтӳсем сасартӑк арканни.
Хӑрушӑ — эс, ҫап-ҫамрӑкскер, ҫӗн тупӑкра выртни.
Хӑрушӑ — сан сукмакупа утакансем ҫукки.
Хӑрушӑ — сан тӑпру ҫинче ҫумкурӑк ҫеҫ ӳсни.

...Ӳпкелешмесӗр, шӑппӑн кайӑп,
элчел ҫитсессӗн, эп те.
...Шанас килет, паллах: тен, манмӗҫ?..
Тен, манмӗҫ ҫийӗнчех?..

*16.10.96*

## УНТА

УНТА —
йӑлтах
кураҫҫӗ.
УНТА —
йӑлтах
пӗлеҫҫӗ.
УНТА —
пире
кӗтеҫҫӗ
ПИРЕ ӐСАТНИСЕМ.

*23.11.97*

## ДИСКОТЕКА: УХМАХА ТУХНĂ КАÇ

Салам сана, ухмаха тухнă Яшлăх!
Салам сана, ухмаха тухнă Каç!..
Ташла, каччăсем! Май пур чух савăнса юл!
Ăçта тата пур кунашкал хĕрупраç!

Ташла, каччăсем!.. Яшлăх вăл — пĕр самантлăх!
Ташла, пикесем!.. Кĕçĕр пурте пĕр тан!
Тĕп пултăр ăс-тăн! Сывă пултăр Хаваслăх!
Кама эпир кирлĕ, туссем, ватăлсан?!

Тĕп пултăр ăс-тăн! Сывă пултăр Хаваслăх!
Ĕненĕр мана: савăнни çылăх мар!
...Тин çеç пуçлансаччĕ — вĕçленчĕ те Кĕвĕ...
Тухас кăна тенĕччĕ эп ташлама...

Ташла, каччăсем! Май пур чух савăнса юл!..
Ташла, пикесем! Май пур чух савăнма!..

*15.11.97*

* * *

Эп
паллатăп та...
мана та
палласçех пуль тетĕп.
Эп
шанатăп та...
мана та
шанасçех пуль тетĕп.
Эп
саватăп та...
мана та
савасçех пуль тетĕп.

Эп
саватăп та...

*08.12.98*

* * *

Пĕлсе пĕтер хĕрарăм чĕрине!..
Хĕрарăмсăр пулсан-и пурăнмашкăн!..
Анчах,
Хĕрарăм пулмасан,
к а м а,
каçарăр та, çак тамăк-пурнăç кирлĕ?!

*13.01.99*

* * *

Эс калатӑн: «Ӑнсӑртран!..».
Эп калатӑп: «Ҫук!».
Эс калатӑн: «Кӑлӑхах!».
Эп калатӑп: «Ҫук!».

Эп калатӑп: «Эпӗ — сан!».
Эс калатӑн: «Ҫук!».
Эп калатӑп: «Эсӗ — ман!».
Эс калатӑн: «Ҫук!».

...«Ҫук!» та «ҫук!» апла?.. Юрать!..
...Манӑн — шанчӑк ҫук...
Манӑн ш а н ч ӑ к кӑна ҫук.
Санӑн э п ӗ ҫук!

*03.12.98*

* * *

Эп хам та айăплă, паллах... —
Сана ун чух кĕтсе илмерĕм.
Тата кăшт кĕтнĕ пулсанах
Тухаттăн эсĕ... Эп — кĕтмерĕм.

Эп хам та айăплă, паллах...
Ну мĕн тăвас тен — юратмастăп,
Ну юратмастăп эп кĕтме!
Эп яланах таçта васкатăп.

Анчах та эсĕ те ун чух
Мана ытла нумай кĕттертĕн.
Анчах та эсĕ те ун чух
Эп мĕнлине шута илмерĕн.

... П ĕ р и — васкарĕ ытлашши.
Т е п р и вара — васкас темерĕ...
Пĕри халь васкĕччĕ тем пек.
Анчах тепри «Килсем!» темерĕ.

*05.12.98*

* * *

Ҫулсем пирки, тархасшăн, калаҫмастпăр.
Эп — ватă мар! Эп пĕртте ватă мар!
Шур ҫӳҫ пĕрчисене те тĕкĕнместпĕр.
Эп вĕсене юри шураттарман.

Эп ватă мар, илтетни, ватă мар эп!
Эп халь — охо! Эп халь — вунҫиччĕре!
Эх, санăн эп чуптунине курасчĕ!..
Вара эс йăлт ăнланăттăн тӳрех.

Сан эп юрланине илтесчĕ, тусăм!
Курасчĕ санăн эп... юратнине!..
Эс ун чухне йăлтах, йăлтах ăнланăн:
Ăнланăн ЧУНШĂН ВĂХĂТ ҪУККИНЕ.

...Шур ҫӳҫ пĕрчи вăл — ячĕшĕн, илемшĕн...
Шур ҫӳҫ пур чух арҫын илемлĕрех!

*07.07.97*

* * *

Ан имен!..
Эп хам та именетĕп...
Эп кун пек курманччĕ именсе...
Эп сана, пĕлетĕн-и, мĕн чухлĕ?!.
Эп сана, пĕлетĕн-и, мĕн чул?!.

Ан имен!..
Эп хам та именетĕп...

*06.12.98*

* * *

Эп те пулнă-ши вара пĕчĕккĕ тахçан?
Эп те выртнă-ши вара сăпкара тахçан?..
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
«Эс те пулнă, — теç мана, — пĕчĕккĕ тахçан».
«Эс те выртнă, — теç мана, — сăпкара тахçан».

Эп те вĕçнĕ-ши вара тĕлĕкре тахçан?
Эп те чупнă-ши вара çаруран тахçан?..
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
«Эс те вĕçнĕ, — теç мана, — тĕлĕкре тахçан».
«Эс те чупнă, — теç мана, — çаруран тахçан».

Эп те курнă-ши вара савăнса тахçан?
Эп те курнă-ши вара юратса тахçан?..
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
«Эс те курнă, — теç мана, — савăнса тахçан».
«Эс те курнă, — теç мана, — юратса тахçан»...

*03.06.98*

## МĔНРЕН ПУÇЛАНАТЬ ЮРАТУ?

Мĕнрен
пуçланать
Юрату?..

Юханшыв пуçланать çăлкуçран.
Çуркунне пуçланать тумларан.
Çĕнĕ кун пуçланать шуçăмран.
Юрату пуçланать...

Мĕнрен
пуçланать
Юрату?..

*30.08.98*

## ТЕН...

Тен... Телейӗмччӗ эс манӑн?..
Тен... Хӗвелӗмччӗ эс ман?..
Куҫӑмран пӑхса йӑл култӑн,
Тӗл пулсассӑн ӑнсӑртран.

Эс «Миҫе сехет халь?» — терӗн.
«Вуннӑ ҫурӑ», — терӗм эп.
«Вуннӑ ҫурӑ?!» — терӗн эсӗ.
«Вуннӑ ҫурӑ», — терӗм эп.

Вуннӑ ҫурӑччӗ чӑнах та.
Вуннӑ ҫурӑ пулнӑран
«Вунпӗр ҫурӑ», — тееймерӗм
Эп, нихҫан та суйманран.

«Тавтапуҫ апла пулсассӑн!..» —
Терӗн эсӗ, йӑл кулса.
«Темех мар-ҫке», — терӗм эпӗ,
Аллӑма пирус тытса.

«Сывӑ пулӑр!» — терӗн эсӗ.
«Сывӑ пулӑр», — терӗм эп.
...Тем сиссе, пуҫа ҫӗклерӗм...
Куҫӑмран ҫухалнӑ эс.

...Тен... Телейӗмччӗ эс манӑн?..
...Тен... Хӗвелӗмччӗ эс ман?..

*22.02.97*

* * *

Сана чăнах та лайăх-и?
Тен, эс юри тăван?
Курман теместĕп — курнă эп...
Сан пеккине — курман.

Ача пек ашкăнатăн эс.
Юрлатăн — вутăш пек.
Хĕвел пек хĕмленетĕн эс.
Ташлатăн — çулăм пек.

Чăнах та юрататăн-и?
Тен, эс юри тăван?..
Савман теместĕп — савнă эп...
Сан пеккине — савман!

*01.07.98*

* * *

Тек ан кӗт мана, ан кӗт!
Тек ан кӗт мана!
Тархаслатӑп — ан ҫунтар
Маншӑнах чунна!

Кам эп? Мӗн эп?.. Эп — каҫхи
Ёмӗлке кӑна.
Эпӗ — сан ҫурту ҫинчи
Ҫут тумлам кӑна.

Эп — сан ҫутӑ Сӑнарна
Савакан кӑна.
Эп — ялан сан еннелле
Утакан кӑна.

Тархаслатӑп — кӗт мана!
Тархаслатӑп — сав!
Сав мана! Мана кӑна!
Тархаслатӑп — сав!..

*24.11.96*

* * *

Эп сана тахҫан курсаччӗ.
Ун чухнех чиперччӗ эс.
Халь курап та — пирӗшти эс!
Йӑл кулсамччӗ — ман килес!

«Астумастӑп» тен?! Суятӑн!
Ун чухне, куҫран пӑхса,
Эс мана «эп — санӑн!» терӗн.
Терӗн, терӗн! Ан тунсам!

Тен... темен те пуль. Темен пуль...
Тен, т е е с ш ӗ н пулнӑ пуль.
Пӗтӗмпех ӑҫтан калайӑн?
Каласси вара — тем чул.

Йышӑнап, айван эп пулнӑ.
Тен, эп халӗ те айван...
Анчах эс те кӑлӑхах халь,
Кӑлӑхах куҫна тартан.

Эп сана тахҫан курсаччӗ...
Ах, ӑҫта-ши ҫав «ТАХҪАН»!..

*28.06.97*

## ПУРПĔРЕХ

М-ма килместĕн халь те эсĕ?
М-мĕн тăватăн эс унта?
Эп, сана кĕтсе, тухатăп
Ухмаха часах кунта.

Эп, сана кĕтсе, асилтĕм
Иртнине те, ав, кăштах.
Ун чухне те эпĕ кĕтнĕ,
Кутăнскер, сана пайтах.

Пĕринче тăман вĕçтерчĕ
Тăвăл тухрĕ кăштахран.
Эп чутах шăнса вилеттĕм.
Хытă ӳсĕртĕм кайран.

Тепринче чутах... «лекетчĕ»
Сирĕн ял каччисенчен...
Эп ун пек чупап теменччĕ...
Чупăн çав — пурнас килсен.

Эс килсен, паллах, сана эп...
Эс килсен, паллах, мана...
...Эп пĕлеп: килместĕн эсĕ.
Пурпĕрех кĕтеп сана!

*25.10.97*

## ТЕЛЕЙЁМЕ — ШЫРА-ШЫРА ХАЛТАН КАЙНӐРАН

Телейём!
Тек сана эп шырамастӑп!
Пайтах шырарӑм эп сана!..
Сана э п кирлӗ-и, Телейём?..
Апла халь э с шыра мана!

*02.01.97*

* * *

Епле калас-ха ман сана,
Епле калас сана:
Ман асăмра, ман чĕрере,
Савниçĕм, эс кăна!

Мĕнпур тĕнче пĕлет сана
Епле эп савнине.
Пĕр эс кăна пĕлесшĕн мар
Тĕнчемĕр пĕлнине.

Пĕр эс кăна курасшăн мар
Тĕнчемĕр курнине.
Пĕр эс кăна курасшăн мар
Эп саншăн çуннине.

Епле калас-ха ман сана,
Епле калас сана?..
Мана эс, юрĕ, ан шелле.
Анчах... шелле хăвна!..

*05.04.97*

* * *

Эп сана ăнлантăм-ха.
Эс кăна мана
Ăнланмастăн çав-çавах,
Темшĕн, тахçанах.

Эп сана ĕнентĕм-ха.
Эс кăна мана
Ĕненместĕн çав-çавах,
Темшĕн, тахçанах.

Эп сана каçарăп-ха.
Эп-çке-ха сана...
Эп-çке сансăр эп те мар,
Темшĕн, тахçанах...

*09.11.98*

* * *

Мĕн чухлĕ ырату сан куҫунта!..
Курас теместĕп — пурпĕрех куратăп.
Кала — мĕнпе сана пулăшмалла?!
Кала кăна — эп пĕтĕмпех тăватăп!

Илтес теместĕп — тиветех илтме:
Телейсĕр, теҫҫĕ сан пирки, ытла та...
...Тахҫан мана эс каласаччĕ: «Ҫук!..
Эп сансăрах телейĕме тупатăп!»...

*20.12.98*

## ПĔРРЕХИНЧЕ

Пĕррехинче-пĕррехинче
эп Атăл хĕрринче
курсаччĕ пĕр чипер хĕре —
ай-вай чиперскере!

Пĕррехинче-пĕррехинче
эп ҫав чипер хĕре
каланăччĕ «Пикем!» — тесе,
«Эс пит чипер!» — тесе.

Пĕррехинче-пĕррехинче
ҫав чипер хĕр мана
«Пĕлетĕп, — терĕ, — эп кăна.
Эп пит чипер, чăнах!»

...Чăнах чиперччĕ ҫав пике...
Чиперччĕ вăл, чăнах!

Ах!..

*16.07.98*

* * *

Сана куричченех
сана
курассине пĕлетĕп.
Эп яланах
сана
курма ĕмĕтленетĕп.
Эп яланах
санпа —
ĕмĕтĕмре — пуплетĕп.
Эп яланах
сана,
Телейĕм ман, кĕтетĕп.

Мана, тен, пĕрисем
«пĕччен вăл» теççĕ пулĕ.
Мана, тен, пĕрисем
кăштах шеллеç те пулĕ...
Епле вĕсем айван!..
Вĕсем пĕлмеççĕ ним те!
Вĕсем эп мĕн тери
телейлине пĕлмеççĕ.

Сана куриччененех
сана
курассине пĕлетĕп.
Эп яланах
сана,
Телейĕм ман, кĕтетĕп.

*08.12.98*

## ЮР... ЮРАТУ... ЮРĂ...

Юр.
Юрату.
Юрă.

...Çурхи юр çăвать те ирĕлет...

Ман
паян
Сана
курас
килет.
Ман
паян
Санпа
пулас
килет.
Ман
паян
Сана
савас
килет.

...Çурхи юр çăвать те ирĕлет...

*03.04.98*

## ВĂРТТĂНЛĂХ

Курман!..
Илтмен!..
Паллах, пĕлместĕп!..
Паллах, пĕлсен те каламастăп!..

...Кам?.. В ă л-и?!
В ă л питĕ килĕшет мана!..
Кам?.. Э п-и?!
Эп хам та килĕшеп ăна!..

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

...Çук-çук!!!
Курман!
Илтмен!
Пĕлместĕп!
Пĕлсен те пурпĕр каламастăп!..

*05.12.98*

* * *

Эпир санпа паллашнă, пĕлетĕн-и, хăçан?..
Эпир санпа паллашнă... тĕнче пуçланнă чух.
Эп пĕтĕмпех ăнлантăм ун чух, сана курсан.
Ăнлантăм эп: нихçан та эс манăн пулас çук.

*03.12.98*

* * *

Тем, паян кичем эс, ман хĕвелĕм...
Тĕлĕкӳ пулмарĕ-и тӳлек?
Сивĕ сăмахпа, тен, кӳрентерчĕç?..
Пĕртте килĕшмест сана кун пек!

Пĕртте килĕшмест сана кичемлĕх!
Паллама та çук паян сана.
Тек нихçан те курмăп-ши эп санăн,
Сар хĕвелĕм, çутă куллуна?..

...Чим-ха, чим!.. Кăштах уяртрĕ мар-и?..
Турăçăм!.. Чăнах та уяртать!..

*06.12.98*

## ТЕЛЕЙ ÇИНЧЕН – КĔСКЕН, ЧĂТМА ÇУК КĔСКЕН

Телейпе
йăнсăртран
тĕлпулаççĕ.
Анчах
телейлĕ
пулмаççĕ
йăнсăртран.

*04.06.97*

## СĔНӲ

Ăнланайманшăн
ан ятла.
Эп хам та
йăлт ăнланаймастăп.
Эс... хăнăх
ч у н у п а  туйма.
Вара хăвах эс
йăлт ăнланăн.

*12.06.97*

* * *

Э п туйнинех туятăн эсĕ.
Э с туйнинех туятăп эп.

Туйма — туятпăр та... Анчах та...
Уссийĕ çук-çке-ха туйнин —
Э п — э с ĕ туйнине,
Э с — э п ĕ туйнине.

Уссийĕ çук-çке-ха туйнин...

*17.07.98*

## ЧĔРЕ

Сана
урăххи
илсе
кайрĕ.

Эп
юлтăм
пĕччен
тĕттĕмре.

Сана
тем
каласшăнччĕ
эпĕ... —

ытла
хытă
тапрĕ
чĕрем.

*23.12.98*

* * *

Юратман пулсан,
кӳренместӗмччӗ.
Юратман пулсан,
ӗненместӗмччӗ.
Юратман пулсан,
тӗлӗнместӗмччӗ.
Юратман пулсан...
Ӳкӗнместӗмччӗ.

*17.01.98*

* * *

Эс илемлӗ пулма тӑрӑшмастӑн.
Эс капла та илемлӗ. Сана
Турӑ... хӑй Илемне парнеленӗ.
Эс тав ту Илемӳшӗн А н а.

Яланах эсӗ пулӑн илемлӗ,
Асӑнтан ямасассӑн ҫакна:
Сана... Т у р ӑ Илем парнеленӗ.
Эс тав ту Илемӳшӗн А н а!..

*06.12.98*

8 — Заказ № К-1305

* * *

Малашне
сан пулĕ...
э п.
Сан
ку таранччен
у та пулнă, ку та пулнă...
Э п  вара — пулман.

Малашне
ман пулĕ...
э с.
Ман
ку таранччен
у та пулнă, ку та пулнă...
Э с  вара — пулман.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Малашне
урăхларах
çиçĕç
çăлтăрсем.

*05.12.98*

* * *

ЭС
ман валли
çуралнă пулнă.
ЭП
сан валли
çуралнă пулнă...

Тахçан тĕл пулнăччĕ эпир...—

ЭС ман валли çуралнине,
ЭП сан валли çуралнине
ĕмĕрлĕхе туйса илсе,
ĕмĕрлĕхе сывпуллашма.

*01.12.98*

* * *

Килĕшетĕн те...
Килĕшместĕн те...
Ытларах килĕшетĕн, паллах...
Çук — йăлтах, пĕтĕмпех килĕшетĕн!..
... Хăш чухне килĕшместĕн пачах...

Килĕшетĕн те...
Килĕшместĕн те...
Çăмăл тетĕн пуль сан куçунтан
Юрату тилмĕрсе тинкермешкĕн...
Чылайччен ўкĕнмешкĕн кайран.

Килĕшетĕн те.
Килĕшместĕн те.
Эс пĕлсенччĕ — епле эп сана!..
... Эх!.. Сана эп кăштах килĕшсен-и?!
... Анчах ку вăл — ман Ĕмĕт кăна...

*07.01.99*

## СЫВПУЛЛАШУ

Каҫарăр та — суйма пултараймастăп!
Эп мĕн туйни — йăлтах ман куҫăмра.
Сăнасарах ман куҫăмран пăхмасăр,
Вара Сире, тен, пулĕ ансатрах.

Сире тем пек эп пулăшасшăн пултăм,
Эсир ялан «пĕччен эп» тенĕрен.
Эсир, чăнах та, яланах пĕчченччĕ.
Сире шеллеттĕм эпĕ чĕререн.

Эсир, чăнах та, яланах пĕчченччĕ.
Эсир пĕчченччĕ сивĕ уйăх пек.
Эсир ун чух та сивĕ уйăх пекчĕ.
Эсир ак халь те сивĕ уйăх пек.

Этемĕн ă ш ă пулмалла ун, ă ш ă!..
Пире капла та сивĕ Ҫĕр ҫинче!
...Эсир, курап та, ним те ăнланмастăр!..
Мĕнех — каҫарăр... Пурăнăр пĕччен!

*02.06.98*

## ПĔЛĔШĔМЕ

Ăшă кулă. Уçă сасă.
Куçусем — вутчуль.
Сахал мар пике тăкать-тĕр
Саншăн çут куççуль.

Сахал мар пике курать-тĕр —
Тĕлĕкре — сана.
Эс вара, «хĕрсем» тесессĕн,
Халь кулан кăна.

Эс вара, «хĕрсем» тесессĕн,
Тарăхан кăна.
Ма тесессĕн — манаймастăн
Çав-çавах ă н а.

Эсĕ шаннă-çке! Ĕненнĕ!..
Эс, паллах, пĕлмен:
Çĕленрен çĕр хут хăрушă
Хăш чухне... этем.

Эс юратнă-çке! Юратнă!..
В ă л вара санпа
Усă курнă та... пăрахнă.
Вăт сана — «шăпа».

Иккĕн халь вĕсем кулаççĕ,
Эс пĕлен, санран.
Пĕринпе эсир юлташлă
Пулнăччĕ тахçан...

Çĕленрен этем пулаймĕ.
Этемрен — çĕлен...
Кун пирки халь, çамрăк тусăм,
Хăв та эс пĕлен.

...Сахал мар пике курать-тĕр —
Тĕлĕкре — сана.
Эс вара, «хĕрсем» тесессĕн,
Халь кулан кăна.

*12.06.97*

## КУҪСЕМ. КУҪА-КУҪĂН

Эп
санăн куҫунтан
сана шелленĕрен
пăхмастăп.
Эс
манăн куҫăмран
пăхмастăн —
ман куҫăмран
пăхайманран.
. . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . .
Ан асаплан —
эп тахҫанах сана каҫарнă.
Сана вара
сан х ă в ă н тивĕ каҫарма.

*09.01.97*

* * *

Халех!
Е тек нихҫан та!
Кунта!
Е тек ниҫта та!
  Ҫук, ҫук — нимле «ыран» та!
  Ҫук, ҫук — нимле «кайран» та!

  Ҫук, ҫук — нимле «кайран» та!
  Ҫук, ҫук — нимле «ыран» та!
  Халех!
Е тек нихҫан та!
Кунта!
Е тек ниҫта та!

*17.12.98*

## ТАКСИРИ КАЛАÇУ

Эс, таксист, манран ан кул, тархасшăн.
Ан шӳтле «ку çын — тăмсай» тесе.
Эс мана ăнланăн та каçарăн,
Эп паян мĕн туйнине пĕлсен.

Эс, паллах, куратăн — çамрăк мар эп.
Пурнăçăн тутийĕ-масине
Тутанса эп курнă, ырă çыннăм,
Эп пĕлеп куççуль тăварлине.

Эп пĕлетĕп — юрату вăл суккăр.
Суккăр пулнă эп те халиччен...
Ай, епле каварлă вăл, хĕрарăм!
Ай, мĕн чул ултав ун куçĕнче!..

Эп тек никама та ĕненместĕп.
Ман чĕре чулланĕ паянтан.
Эп ăна... юратнă-çке, юратнă!
Унсăр халь епле пурнас-ха ман?!

Эп ăна юратнă-çке, юратнă...
Унсăр халь епле пурнас-ха ман?..

*06.04.98.*

* * *

Çинçе эс.
Хӑва́ пек.
Черченкӗ.
Шевле́ пек.
Йӑваш эс.
Çап-çамрӑк пӗччен хурӑн пек.
Таса эс.
Ытла та,
Ытла та таса эс.
Алтарь умӗнче çунакан çурта пек.

Çинçе эс.
Черченкӗ.
Йӑваш эс.
Таса эс.
...Инçе эс.
Инçе эс.
Ытла та инçе...

*09.05.95*

* * *

«Эс манран телейлĕрех!..», —
Терĕн эс мана.
«Ку чăнах та тĕрĕсех», —
Терĕм эп сана.

Ку чăнах та тĕрĕсех...
Анчах темшĕн ман...
Тата кăшт телейлĕрех
Кăмăл пур пулма.

*04.12.98*

* * *

Ансаттине ан кăткăслат, тархасшăн!
Сахал-им кăткăсси çак тĕнчере?..
Пур эс. Пур эп. Чун тĕпĕнче пур Туйăм.
Тата мĕн кирлĕ, мĕн çитмест пире?

Пур эс. Пур эп. Пур пирĕн çутă Тунсăх...
Куратăн-и — епле ансат йăлтах!
...Ансаттине ан кăткăслат, тархасшăн!
Мана кăна юрат эс хытăрах!

*17.12.98*

* * *

Саншăн
м ĕ н
паха?..
Пĕлетĕп!..
Саншăн
эп пурри паха.
Саншăн
«эп сана, савниçĕм,
юратап!» тени паха.
Саншăн
эп «савни, эп сансăр
пурнаймасп!» тени паха.

Маншăн
м ĕ н  паха-и?..
Маншăн...
Маншăн
эс пурри паха.
Маншăн
эс мана «савниçĕм,
эпĕ — сан!» тени паха.
Маншăн
эс «савни эп сансăр
пурнаймасп!» тени паха.
...Тата маншăн
питĕ-питĕ
ÇАК СĂВВА ÇЫРНИ
паха!

*20.12.98*

## АРҪЫНСЕН СĂВВИ

**Тантăшăмсене** — вăтăр пиллĕкри,
хĕрĕхри... Арсене — хисеплесе,
йăлланса, кăштах пăшăрханса

*Автор*

Эх, атьсем-атьсем-атьсем!..
Атьсемри-атьсем!..
Тин кăна вунҫиччĕре марччĕ-и эпир?
Тин кăна туй каччисем марччĕ-и эпир?..
Эх, атьсем-атьсем-атьсем!
Атьсемри-атьсем!..

Эх, атьсем-атьсем-атьсем!
Атьсемри-атьсем!..
Кĕмĕл ҫӳҫ те курăнать
пуҫ ҫинче, атьсем.
Хăш чухне шăмшак сурать.
Хăш чухне Тĕнче
тĕксĕмленнĕн туйăнать,
атьсемри-атьсем.

Ĕнтĕ куртăмăр, атьсем!
Ĕнтĕ куртăмăр!
Тăвăлне те куртăмăр,
ыттине те пуль...

Чи пахи ку мар, атьсем,
чи пахи ку мар...
Ю р а т с а эпир курни —
чи пахи, атьсем!

Эпир курнă ПУРĂНСА!
ПУРĂНСА, атьсем!

. . . . . . . . . . . . . .

Кĕмĕл ҫӳҫ те курăнать
пуҫ ҫинче, атьсем!..

*13.12.96*

* * *

Юрлать эстрада Ҫӑлтӑрӗ.
Юрлать Телей ҫинчен.
Илемлӗ, ҫутӑ савӑнӑҫ
Ҫиҫет ик куҫӗнче.

Юрлать эстрада Ҫӑлтӑрӗ.
Пин-пин чӗре патне
Ҫитет ун ӑшӑ кӑмӑлӗ,
Ҫӗнсе чӑрмавсене.

Юрлать эстрада Ҫӑлтӑрӗ.
Вӑл... Турӑ халь кунта.
Ҫынсен шӑпи, пуласлӑхӗ...
Унран килет кунта.

Юрлать эстрада Ҫӑлтӑрӗ.
Юрлать Телей ҫинчен.
Ҫиҫет хӗвеллӗ савӑнӑҫ
Ҫынсен куҫӗсенче.

*22.06.96*

## ВЫРСАРНИКУН: КАНЛЁХ

Паян кăштах эп пушă.
Паян канатăп эп.
Турри парсассăн, сăвă
Паян, тен, çырăп эп.

Паян эп питĕ канлĕ.
Хаваслă та-и, тен...
Ĕнер кăна-ха эпĕ
Кун пеккине кĕтмен.

Ĕнер кăна-ха эпĕ,
Яри уçса чуна,
«Çук маншăн канлĕх!» — терĕм
Пĕр кăмăллă çынна.

Эп — Кĕрешӳçĕ!.. Маншăн
Пур Кĕрешӳ кăна!..
Анчах май çук çĕнмешкĕн...
Кĕрешнипе кăна.

Иккен Кĕрешекенĕн
Канма та пĕлмелле.
Иккен çĕнес тесессĕн,
Пĕлсе кĕрешмелле...

...Паян эп питĕ канлĕ.
Паян канатăп эп.
Турри парать те — сăвă
Паян çыратăп эп.

*01.12.96*

* * *

Ай, паян аван çанталăк!
Ай, паян тĕнче хитре!
Çӳлелле пăхсамăр пурте:
Эп вĕçетĕп пĕлĕтре!

Эп вĕçетĕп те вĕçетĕп!..
Вĕçĕр пурте манпалан!
Пĕрре çеç вĕçсе курсамăр, —
Чарăнайăр-и кайран?..

Пулăр пурте — ăмăрткайăк!
Вĕçĕр пурте — тӳпере!
Тусăмсем, кун пек çанталăк
Ĕмĕрте пулать пĕрре!

Çыншăн м ĕ н паха?.. Çанталăк!
Ыр çанталăк хăй — парне.
Май пур чух, тархасшăн, кулăр,
Вĕçĕр, савăр пĕр-пĕрне!

Хĕн-хурпа асап тĕп пулччăр!
Хăп пиртен, усал-тĕсел!
Эс вара, Ăшпиллĕ Çутă,
Тӳпере ялан çиçсем!

Ай, паян аван çанталăк!
Ай, паян тĕнче хитре!
Çӳлелле пăхсамăр пурте:
Эп вĕçетĕп пĕлĕтре!

*05.03.97*

## ЭП ПАЯН

*Силпине*

Тăп-тăп-тăп!
Тăпăр-тăпăр-тăп!
Эп
паян
кулатăп та юрлатăп!

Тăп-тăп-тăп!
Тăпăр-тăпăр-тăп!
Эп
паян
пурне те юрататăп!

Тăп-тăп-тăп!
Тăпăр-тăпăр-тăп!
Эп
паян
сире телей сунатăп!

Тăп-тăп-тăп!
Тăпăр-тăпăр-тăп!..
Тăп-тăп-тăп!
Тăпăр-тăпăр-тăп!..
Тăп!..

*12.06.97*

## АЮ-ДАГ

*Илемпине*

Аю-Дагăм, Аю-Даг, Аю-Даг,
Çĕклесем пуçна пăртак,
Пăртак!
Çиçсе иртрĕç ĕмĕрсем
Пайтах.
Çиçсе иртрĕç...
Эс кăна
Çавах
Çывăратăн,
Пĕтĕмпех манса,
Аю-Дагăм, Аю-Даг, Аю-Даг...

Аю-Дагăм, Аю-Даг, Аю-Даг,
Намăс мар-и çак сана
Кăштах?
Ыйхăран тĕнче ирпе
Вăранать.
Эс анчах-çке, Аю-Даг,
Çывăран.

Йывăç-курăк сан çинче
Ешерет.
Шеллемест сана Хĕвел —
Хĕртет.
Сĕм вăрман сана кĕтет —
Чĕнет.
«Ман маттур упам
Ăçта-ши?» — тет.
Эс... — çывратăн,
Аю-Даг, Аю-Даг...

. . . . . . . . . .

Çывăрах эппин тата
Кăштах,
Аю-Дагăм, Аю-Даг, Аю-Даг.

Тутлă пултăр ыйăху,
Аю-Даг!

Ырӑ пултӑр тӗлӗкӳ,
Аю-Даг!

. . . . . . . . . . .

Каҫ пулса килет.
Часах
Эп те путӑп ыйӑха,
Аю-Даг...

*30.08.96*

## ИККĔЛЕНӰ

У та пулĕ!
Ку та пулĕ!
Урăххи те пулĕ!
Çилĕ — улĕ.
Алтăр — тулĕ.
Салхулли — йăл кулĕ.

Пулĕ! Пулĕ!
Тем те пулĕ!..
Вăрăм вăл — Çын ÇУЛĔ.
...Ним те юлмĕ —
Шанчăк юлĕ.
Юлĕ-ши?..
...Тен, юлĕ...

*09.02.97*

* * *

Кӳренме, паллах, ансат.
Йывăр — каçарма.
Йывăр — айăпа кĕрсен,
Каçару ыйтма.

Йывăр — Тĕнчене килме.
Йывăр — Тĕнчепе
Килĕшӳллĕ пурăнма
Ĕмĕр тăршшĕпе.

Йывăр — Пурнăç Хирĕнче
Тĕрĕс Çул тупма.
Йывăр — çав Çула тупсан,
Такăнми утма.

Йывăр — çак сăвва çырма.
Тен, хăшне-пĕрне
Вулама та çăмăл мар
Çак йĕркесене.

Йывăр, йывăр — пурăнма!
Çăмăл — парăнма.
Çăмăл — ÇЫН ПЕККИ пулма.
Йывăр — Ç Ы Н пулма!

*01.09.98*

* * *

Ан ăмсан, ан кĕвĕç, ан тирке...
Ĕмĕрӳ ытла та сан кĕске.
Пурăн — тĕнчерен эс тĕлĕнсе.
Пурăн — хăвна хăв эс çĕнтерсе.

Савăн — эс паян хăв куçупа
Тĕнчене куран. Йăл куллупа
Тĕнчене илем кӳретĕн эс,
Пĕчĕк хĕвел пек çиçетĕн эс.

Савăн — эс паян хăв урупа
Çирĕппĕн утан хăв çулупа.
Турă юратать сана паян.
Турă пулăшать сана паян.

Савăн — эс паян çак тĕнчере
Пур. Апла-тăк çакă Тĕлĕкре
Пурăн — хăв пурришĕн савăнса,
Пурăн — çынсене телей сунса.

Ан ăмсан, ан кĕвĕç, ан тирке.
Ĕмĕрӳ ытла та сан кĕске.

*30.08.98*

* * *

Шухă пулнă, шухăшсăр çӳренĕ...
*В. МИТТА.*

Айван та пулнă, пулнă çăмăлттай та.
Ытла ĕненнĕ, шаннă çынсене.
Чуна яри уçса кĕртме васканă
Тин çеç паллашнă «тус-юлташсене».

Епле-ха шанмăн, мĕншĕн-ха ĕненмĕн —
Кашни çынра куран пулсан х ă в н а?
Эс çынсене шанан, саван пулсассăн,
Çынсен та савмалла-çке пек сана!..

Пĕр çĕр çинче эпир утса çӳретпĕр.
Пĕр сывлăшпа сывлатпăр... Пĕр-пĕрне,
Апла пулсассăн, м а усал сунатпăр?
М а шеллеместпĕр чунăмăрсене?!

«Усал та кирлĕ», — теççĕ пĕрисем, ав.
Кирлех те-ши?.. Пĕлместĕп, тен, кирлех?..
Усал хистет-мĕн тимлĕрех пулмашкăн,
Усал çынна тăвать-мĕн çирĕпрех.

...Айван пулсан та, çăмăлттай пулсан та,
Эп ĕненеп, шанатăп çынсене.
Санпа, Усал, эп пĕр чĕлхе тупаймăп!
Эп савнă, эп саватăп Ырринех!

*26.06.98*

* * *

Пĕтĕмпех — «Юратьпе» «Юрамасть» хушшинче.

Сан чĕрӳ — «Юратьпе» «Юрамасть» хушшинче,
ман чĕрем...
Сан шăпу — «Юратьпе» «Юрамасть» хушшинче,
ман шăпам...

Пĕтĕмпех — «Юратьпе» «Юрамасть» хушшинче.

*18.07.98*

## КĔПЕР

Кĕперĕ пур —
к а ç м а хăратăп.
Пит хăравçах та мар пек хам.
К у н т а, паллах, кичем.
Анчах та
к у н т а хăйне кура паха.

Кунта эп йăлт пĕлсе тăратăп:
хăçан? камсем? кама? ăçта?..
Кичем, паллах, кунта.
Çапах та
ырри те пур кунта кăштах.

У н т а вара...
У н т а — ытла та
черченкĕ, çепĕç шевлесем.
Унта — аван.
Анчах... сасартăк...
унта ман ӳ к ĕ н м е тивсен?!

...Кĕперĕ пур.
Кĕперĕ пур та...
Уссийĕ çук Кĕпер пуртан.

*12.06.97*

## УЯВ ИРТСЕН

Уяв иртсен, ҫынсем кичем пĕр хушă.
Пире ытла ансат улталама.
Пире кулма хушаҫҫĕ те — кулатпăр.
Кайран пуҫлатпăр... ассăн сывлама.

Уяв, уяв!.. Каварлă мыскараҫă!..
Епле хаваслă пуҫланатăн эс!..

*25.06.97*

* * *

Атя-ха, тăванăм, ларса калаçар...
Эс мĕншĕн мана кун пекех кураймастăн?
Тен, çылăхăм пур манăн сан умăнта?
Каçар та, эп, тен, темĕскер ăнланмастăп?..

Пурах пуль çав çылăхăм... Хам шутăмпа,
Усал эп сунман халиччен никама та.
Сана та, тăванăм, усал эп туман.
Эс пур, ав, кăштах урăхла шухăшлатăн.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

...Каллех — çав ыйту, çав нуша, çав инкек:
Ыррин еплерех пулмалла — Усалпа
Виçме тивнĕ чух вăй-халне, хăватне?
Ыррин те юрать-и пулмашкăн усал?
Юрать-и Ыррин... Усала тавăрма?
Ыррин, тен, ялан каçару ыйтмалла?
Ыррин, тен, ялан, Усала каçарса,
Усал умĕнчен пăрăнса утмалла?..

...Каллех — çав ыйту, çав нуша, çав инкек.
Каллех çул юппи умĕнче эп тăратăп.

*16.07.98*

## ТУСĂМСЕНЕ

*А. И. Лукьянова*

Ман ăçтан пĕлес пурне те?..
Турă мар-çке эп, туссем!
Турă çеç йăлтах пĕлет-тĕр.
Шутсăр йывăр — йăлт пĕлсен.

Сăмахран, пĕлместĕп эпĕ
Çăлтăр мĕншĕн çиçнине.
Эп пĕлместĕп мĕншĕн Вăхăт
Çиçĕм евĕр вĕçнине.

Эп пĕлместĕп: мĕн вăл — Сăвă.
Эп пĕлместĕп: мĕн вăл — Чун.
Эп пĕлетĕп: çĕр иртсессĕн,
Тĕнчене килет Çĕн Кун.

Эп пĕлместĕп: мĕн вăл — Çиçĕм.
Эп пĕлместĕп: мĕн вăл — Çил.
Эп пĕлетĕп: Çиçĕм кирлĕ.
Эп пĕлетĕп: кирлĕ Çил.

Эп пĕлетĕп: ПУРТЕ кирлĕ.
Эп пĕлетĕп: ÇУК вăл çук.
Пур ПУРРИ кăна! ÇУККИЙĔН
Пур пулмашкăн майĕ çук!

Эп пĕлетĕп манăн питĕ
Йăлт пĕлессĕм килнине.
Эп тата, туссем, пĕлетĕп
Эп сире юратнине!

Эп тата çакна пĕлетĕп:
Тусăмсем, эсир пур чух,
Çĕр çинче манран хăватлă,
Манран вăйлă çын та çук!

*04.06.97 — 08.11.98*

* * *

Епле ансат анаталла анма!..
Никам чармасть, чӑрмантармасть сана.
Анатӑн та анатӑн... Аннӑҫем
Ансатлансах пырать — сана — анма.

Шутлатӑн эс: тата кӑштах ансан,
Эп пуҫлӑп талпӑнмашкӑн тӑвалла.
Анчах, «кӑштах ансан», тата «кӑштах»
Анатӑн эс... Унтан — тата кӑштах...

Унтан туйса илетӗн эс: текех
Санран пачах та нимӗн те килмест!
Унтан эс ӑнланатӑн халӗ тин
Сана никам та ҫӑлайманнине...

Ансат, ытла ансат —
анаталла
анма!

*11.11.97*

## ЛАЙӐХ ХУРАВ

**(тахҫан илтнипе усӑ курни)**

— Мӗн ку?..
— Япала ку!

— ЛАЙӐХ каларӑн, Якку!

*09.11.98*

## ПАТША МЫСКАРИ Е ШАННӐ КАЙӐК ЙӐВАРА ПУЛМАННИ, ШЕЛ ПУЛИН ТЕ, ЫРРИ ПАТНЕ ИЛСЕ ÇИТЕРМЕСТ

А король-то — голый!..
*Вырăсла куçарнă юмахран*

Ара!.. Патшамăр пирĕн çап-çара-иç!..
Ăçта ун тумĕ?! Турăçăм, çырлах!
Кун пеккине эпир унран кĕтменччĕ!..
Мĕнпур тĕнче халь пирĕнтен кулать.

Епле эпир вăл килессе кĕтсеччĕ!
Епле эпир саваттăмăр ăна!..
Малтан вăл пит маттур пек курăнатчĕ.
Йăл куллипех илетчĕ тыткăна.

Ак халь тăратпăр ним тума пĕлмесĕр.
Çара патшамăр йыхăрать пире
Малтан-мала ун хыççăн талпăнмашкăн.
«Телейлĕ тăвăп, — тет вăл, — эп сире!».

...Тем тумалла?.. Те, курнине курмасăр,
«Патшамăр хыççăн — малалла!» — тесе,
Çара патшамăр хыççăн ăнтăлар-и,
Малта ырри кĕтменнине пĕлсех?..

...Мĕн тăвăпăр, хисеплĕ ырă халăх?
Мĕн тăвăпăр, хисеплĕ ентешсем?..

*27.10.94— 08.01.97*

## ТĔРĔС МАР САВĂ

Пĕрисем питĕ тĕрĕс пурнаççĕ...
(Ку, ăнланăр, ўпкев-тавраш мар).
Пĕрисем питĕ тĕрĕс тăваççĕ —
Питĕ тĕрĕс ялан пурăнса.

Эп те, эп те пит тĕрĕс пурнасшăн!..
(Ку, ĕненĕр, ултав-суя мар).
Çук, пулмасть!.. Пурнаймастăп эп тĕрĕс!
Эп курасшăн... й ă л т а х тутанса!

Эпĕ канлĕ те лăпкă пуласшăн.
Эп пуласшăн хастар та кăра.
Эп, паллах, Çĕр çинчех пурăнасшăн.
...Тўпере те курасшăн вĕçсе.

Эп, паллах, нумая хапсăнмастăп.
Эп пĕлетĕп: ытла çăткăн эп.
Пурпĕрех нумая хапсăнатăп —
Эп курасшăн й ă л т а х тутанса!

Эп, паллах, нумая хапсăнатăп.
Эп, паллах, тĕрĕс мар пурăнап.

*13.12.96*

## ТЎПЕ: ÇĂЛТĂРСЕМ

«Тӳпе тулли — çут çăлтăр!» —
тесе каларĕç пурте.

Эп шăппăн хуравларăм:
«Тӳпе тулли — КУÇСЕМ».

## ЙĔРКЕ

Санран
пуçланать
пĕтĕмпех,
Пĕрремĕш Йĕрке.

Санпа
вĕçленет
пĕтĕмпех,
Юлашки Йĕрке.

Çав тери çирĕп
çак Йĕрке.

*16.09.98*

## ÇАПЛА МАР-И-ХА?..

Çын куççулĕ —
Çĕр Чăмăрĕ пек.
Çĕр Чăмăрĕ
хăй те...
таса куççуль пек.

*04.06.97*

## МАН ПУРНĂÇĂМ

Ман пурнăçăм —
кĕрхи çулçă çинчи
пĕчĕк çутă тумлам.

Вĕçет
сар çулçă —
Тĕнче Уçлăхĕнче.

Сар çулçă çинче —
Пĕчĕк Çутă Тумлам.

*10.10.97*

## КĂВАЙТ УМĔНЧЕ

**е нихçан та тухатса курман сăвăç тухатма хăтланни**

...Çунтăр! Çунтăр! Çунтăр!
Çунтăр вăйлăрах!

...Сӳнтĕр! Сӳнтĕр! Сӳнтĕр!
Сӳнтĕр хăвăртрах!..

Мĕн пурри те манăн —
Çак Кăвайт кăна!
Мĕн пурри те манăн —
Çак Хĕлхем кăна!

...Çунтăр! Çунтăр! Çунтăр!
Çунтăр вăйлăрах!

...Сӳнтĕр! Сӳнтĕр! Сӳнтĕр!
Сӳнтĕр хăвăртрах!

Манăн пĕтĕм пурнăç —
Тунсăх та шырав!
Манăн пĕтĕм пурнăç —
Тӳрленми суран!

...Çунтăр! Çунтăр! Çунтăр!
Çунтăр вăйлăрах!

...Сӳнтĕр! Сӳнтĕр! Сӳнтĕр!
Сӳнтĕр хăвăртрах!

Турăçăм, пар шанчăк!
Тӳсĕм пар мана!
Айăплă пулсассăн,
Каçарсам мана!

...Çунтăр! Çунтăр! Çунтăр!
Çунтăр вăйлăрах!

...Сӳнтĕр! Сӳнтĕр! Сӳнтĕр!
Сӳнтĕр хăвăртрах!

Эп пĕлместĕп — мĕншĕн
Эп пурăннине.
Эп пĕлеп — пурнассăм
Питĕ килнине.

...Çунтăр! Çунтăр! Çунтăр!
Çунтăр вăйлăрах!

...Сӳнтĕр! Сӳнтĕр! Сӳнтĕр!
Сӳнтĕр хăвăртрах!

Мĕн пурри те манăн —
Çак Кăвайт кăна!
Мĕн пурри те манăн —
Çак Хĕлхем кăна!

...Сӳнтĕр! Сӳнтĕр! Сӳнтĕр!
Сӳнтĕр хăвăртрах!

...Çунтăр! Çунтăр! Çунтăр!
Çунтăр вăйлăрах!

*30.10.96*

## ЧИ ПАХИ

Эп — сиртен пĕри.
Анчах
Эп — сирĕн пек мар.
Эсир —
вăйсăр çуртасем.
Эп —
Сӳнми Кăвар.

Ăнланмастăр?!
Пултăрах!
Паян ЭП сире
ăнланни паха.
Апла
ку та — чиперех!

Юратмастăр?!
Кăлăхах!
ЭП вара сире
юрататăп — Турă пур —
пĕтĕм чĕререн!

Эп — сиртен пĕри.
Анчах
эп сирĕн пек мар.

*25.10.97*

## ХĂРАВÇĂ

Хăратăп эп...

Хăратăп —
пĕррехинче ирпе,
Хĕвел тухсан,
Хĕвел шевлисене
ӳтпе те чунăмпа
туйма пăрахасран.

Хăратăп эп —
чĕрем хĕмленнĕ чух
ыр ĕç
сахал ытла
тăвассинчен.

Хăратăп эп...

Хăратăп эп...
мана
паян
ĕненекен çынсем
ыран
манран
МАН АЙĂПА ПУЛА
сивĕнесрен.
Хăратăп эп.

Хăратăп эп...
Çак Çутă Тĕнчере...
хам никама та кирлĕ маррине
туйма тивессинчен
хăратăп эп.

Хăратăп эп.
Хăратăп.
Сасартăк
хам нимрен те хăрама пăрахасран
хăратăп.

*06.07.97*

* * *

Пурӑнмаллах пуль ҫав, пурӑнмаллах пуль,
Туртмах тивет пуль Пурнӑҫӑн Лавне?..
Ман Лавӑма тата кам турттӑр мансӑр,
Кам куртӑр мансӑр эп курассине?

Пурӑнмаллах пуль ҫав, пурӑнмаллах пуль...
Хӑш чух, паллах, сулас килет алла
Пурри ҫине, ҫукки ҫине... Анчах та
Эс талпӑнатӑн пурпӗр малаллах.

Пурӑнмаллах пуль ҫав, пурӑнмаллах пуль...
Турри курать пуль ман ӑраскала.
Вӑл пӗлнине эп пӗтӗмпех пӗлмесп пуль,
Вӑлах хистет пуль: «Сан пурӑнмалла!».

Пурӑнмаллах пуль ҫав, пурӑнмаллах пуль...
Турри парсан, тен, пулӗ-ха ырри.
Ытахальтен юхмасть вӑл — ҫын куҫҫулӗ.
Ытахальтен пулмасть вӑл — мӗн пурри.

*01.07.98*

## МДА...
**е Валери Туркай хăйĕн черетлĕ çуралнă кунне (1998 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕ) кĕтсе илме психологипе мораль тĕлĕшĕнчен хатĕрленнĕ каçхине çырăннă сăвă**

...Тата тепĕр кун çиçсе иртрĕ...
...Ыран эп тултарăп...
...Тăхта!..
...Ы р а н эп м и ç е тултарап-ха?..
...Ыран эп тултаратăп...
...Мда...

*16.04.98*

## ТУРĂШ

Хуралса килет хăш чух
Пĕтĕм çут тĕнче.
Эс тăратăн темĕнччен
Турăш умĕнче.
Эс шыратăн шанчăкна
Турă куçĕнче.
Эс пĕлетĕн: сан шăпу
Турă аллинче.
Эс туятăн: Вăл пĕлет
Пĕтĕмпех-йăлтах.
Вăл сана каçаратех
Хальхинче татах.
Эс пĕлетĕн: çылăху
Санăн сахал мар.
Тархаслатăн эс çавах:
«Турă, шанчăк пар!».

...Хура пĕлĕт сирĕлет,
Акă, сан çинчен.
Эс туятăн: вăйлă эс
Халь нихçанхинчен.
Сан ĕçӳ-хĕлӳ ăнать,
Пурнăçу ăнать.
Кун иртет те, каç иртет...
Турăш — манăçать.
Манăçать эс, нишлĕскер,
Турăш умĕнче
Тахçан шанчăк шырани
Турă куçĕнче.

...Хуралса килсен тепре
Саншăн çут тĕнче,
Эсĕ тăрăн, ак, каллех
Турă умĕнче.

*25.06.98*

## ТИТАНИК

Тăхта! тăхта! тăхта, «Титаник»!
Вăран, ан çывăр, капитан!
Çак каçлăха кăна пулин те
Хăвна, хăвна кăна эс шан!

Ытла та канлĕ кĕçĕр Тинĕс!..
Ытла та çутă çăлтăрсем...
Ытла та ырă-çке ку тĕлĕк...
Ытла та чăрсăр ĕмĕтсем...

Ытла каварлă-çке ку канлĕх...
Ан шан, «Титаник», Тинĕсе!
Ахальтен мар вăл кĕçĕр канлĕ!..
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
...Кам путтăр — путасса пĕлсен...

*09.03.98*

## ЧĂНЛĂХ

Чăнлăх тахçанах паллă.

*ГЕТЕ*

Çуралтăн пулсассăн — пурăн!
Пурнатăн пулсассăн — ĕнен!

...Йăлтах урăхла — ĕненсессĕн.
...Нумай çăмăлрах — ĕненсен!

*16.09.98*

* * *

Ытла хаваслӑ пултӑм ҫав
          ӗнер эп кунӗпе...
Ытла нумай шӳтлерӗм ҫав
          ӗнер эп туссемпе...
Сӑлтавсӑр-мӗнсӗр култӑм эп;
          курсан кичеммине,
«Мӗн ҫиттӗр, тусӑм, — терӗм эп, —
          хаваслӑ пулнине!»...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ҫитмест, чӑнах та, нимӗн те
          хаваслӑ пулнине...
Ҫитмест, чӑнах та, нимӗн те,
          телейлӗ пулнине...

*08.11.98*

## ĂНĂÇУ

Паян — ăнать;
Ыран — ăнмасть.
Паян — ăнмасть;
Ыран ăнать.

Ялан
никамăн та
ăнмасть.
Хăш чух
такамăн та
ăнать.

Хăш чух
такамăн та
ăнать.
Ялан
никамăн та
ăнмасть.

*16.09.98*

## УКÇА

Кĕсье
тĕпĕнче
укçа
пур та —
туятăп
хама
сумлăрах.
Кĕсье
тĕпĕнче
укçа
пур та —
туятăп
хама
вăйлăрах.

...Кĕсье
тĕпĕнче
укçа
çук та —
укçа
тăккалас
хуйхă
çук.

*17.09.98*

## ИРĔКЛĔХ

Мĕн вăл — Ирĕклĕх?
Ирĕклĕх вăл —
Сывлăш.
Мĕн вăл — Ирĕклĕх?
Ирĕклĕх вăл —
Çутă.
Мĕн вăл — Ирĕклĕх?
Ирĕклĕх вăл —
Турă.

*20.08.98*

## ЮМАН

Ăçтан хăва пулас-ха манăн —
Енчен те эп... Юман пулсан?..
Хăва тавраш, тавах, çук мар халь.
Анчах та, шел, сахал Юман.

Хăва тавраш, çапла, нумай халь.
Анчах та, шел, юман сахал.
Халь çилĕсем те пит кăра та...
Халь... авăнма пĕлни паха.

Халь çилĕсем те пит кăра та...
Çиçĕмĕсем те пит усал.
Хăва пулма та çăмăл мар та...
Курсамăрччĕ Юман пулса!

...Ăçтан хăва пулас-ха манăн —
Енчен те эп Юман пулсан?..

*12.06.97*

## ВАЛЕРИ ТУРКАЙ 1996 ÇУЛХИ ЮПА УЙĂХĔН ВĔÇĔНЧЕ ХĂЙĔНПЕ ХĂЙ ПИТĔ КĂМĂЛСĂР ПУЛНĂ ХЫÇÇĂН ÇЫРНĂ СĂВĂ

Çук! килĕшместĕп эп хама!
Пачах та килĕшместĕп!..
Ытла хама саватăп эп.
Хама ытла саватăп.

Çук! килĕшместĕп эп хама!
Пачах та килĕшместĕп!..
Ытла сахал ĕçлетĕп эп.
Ытла нумай канатăп.

Çук! килĕшместĕп эп хама!
Пачах та килĕшместĕп!..
Ытла нумай павратăп эп.
Çынна — сахал тăнлатăп.

Çук! килĕшместĕп эп хама!
Пачах та килĕшместĕп!
Куç курнине — курмастăп эп.
Курманнине — куратăп.

Çук!.. килĕшетĕп эп хама.
Хăш чух к ă ш т килĕшетĕп.
Çапах та эп çак сăввăма
Çыратăп-çке! çыратăп!

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

... Çук! килĕшместĕп эп хама!..
Çук! килĕшетĕп эп хама!..
Çук! килĕшместĕп эп хама!..
Çук! килĕшетĕп эп хама!..

*30.10.96*

## ЧИ КИРЛИ

Пĕрре кăна эп ӳсĕр пултăм...
«Вăл — ĕçкĕç!» — терĕç пĕрисем.
Ĕçтерессе... х ă й с е м ĕçтерчĕç,
Хайсем ĕçтерчĕç, хистесе.

Пĕрре кăна эп ӳсĕр пултăм...
Эп халь пĕлеп ЧИ КИРЛИНЕ:
Ĕçме юрать — пĕлен пулсассăн
Кампа мĕн чул ĕçмеллине.

*30.08.98*

## КӲРЕНӲ

Усси — кӳреннинчен.
Май çук — кӳренмесен те:
Йăлтах — ăнланмалла,
Анчах та — ăнланмаççĕ.

Йăлтах — куç умĕнче,
Анчах — «курмастпăр!» теççĕ.
Чăнах курмаççĕ-ши?
Е курмана переççĕ?

Ăнланĕç-ши?.. Темле...
Тен, каярах ăнланĕç?..
Ăнланмасан?.. Ун чух
Эс хăв йăлтах ăнланăн.

Усси — кӳреннинчен.
Май çук — кӳренмесен те.
— Эс, мĕн, кӳреннĕ-им?..
— Кăштах, ятне тумалăх!..

* * *

Манăçма — манăçать ку инкек те.
Ку асап та, паллах, манăçать.
Халь кăна туйăнать тĕнче пĕтнĕн.
Халь кăна йăлт хуран курăнать.

Пĕтĕмпех — малашне-ха, малта-ха!
Иртерех пытаратăр мана!
Пĕрисем — амансан — хуçăлаççĕ.
Эп вара — вăйланатăп кăна.

Манăçать! манăçать — ку суран та!
Манăçать! манăçать ку асап!
Пĕлĕтсен хыçĕнчен ман Хĕвел те
Тухĕ, вăхăт çитсен, йăл кулса!

*16–22.07.98*

## ТУСӐМСЕНЕ

Усӑ курӑр манпа, усӑ курӑр,
Усӑ курӑр манпа, тусӑмсем!
Ман чӗре хӗмӗпе усӑ курӑр,
Усӑ курӑр ман чун ӑшшипе!

Усӑ курӑр манпа. Ан ӳркенӗр!
Ҫӑлтӑрсем те сӳнеҫҫӗ те, эп...
Эп те сӳнӗп, туссем, эп те сӳнӗп...
Усӑ курӑр манпа — сӳниччен!

Усӑ курӑр манпа, усӑ курӑр!
Эп пӗлетӗп: эп кирлӗ сире!
Эп... сире кирлӗрен пурӑнатӑп!
Эп телейлӗ — сире кирлӗрен!

Усӑ курӑр манпа. Тав тумашкӑн,
Мухтамашкӑн мана кирлӗ мар.
Эп сире кирлӗрен пурӑнатӑп!
Эп телейлӗ — сире кирлӗрен!

*15.05.96*

* * *

Ытла та
хăвăрт
тĕттĕмленчĕ.
Ытла ир
тиврĕç
çăлтăрсем.

Эп
КУН
халех
иртет
теменччĕ.
Эп
КАÇ
халех
пулмасть тесе.

Эп
КАÇ
халех
пулмасть тесе.

*05.12.98*

* * *

Кур-ха, кур: Хӗвел тухать!
Мӗн тери илемлӗ,
Мӗн тери таса ку Ир!
Кур-ха, кур, тăванăм!

Кур-ха, кур: Ҫӗн Кун килет!
Мӗн тери хаваслă,
Мӗн тери чипер ҫак Кун!
Кур-ха, кур, тăванăм!

Кур-ха, кур: ...Ҫӗн Кун иртет!..
Мӗн тери кӗске вăл!..
Кур-ха, кур: Хӗвел анать...
Кур-ха, кур, тăванăм...

*25.10.97*

* * *

Эп нимшĕн те тек ӳкĕнместĕп!
Эп халь пĕлетĕп: тĕрĕсмарлăх çук!
Пилеш хĕлле пиçсе çитет пулсассăн...
Ку — тĕрĕс! Тĕрĕсмарлăх çук!

Çу иртнĕ хыççăн хĕл ларман пулсассăн,
Ăçтан пĕлес ман ăшă çу мĕнне?
Е — ирĕклĕ пулса кураймасассăн,
Ăçтан пĕлес ман тыткăн тутине?

Çук тĕрĕсмарлăх!.. Мĕн пурри — йăлт — тĕрĕс!
Каçпа Хĕвел анать... Ку тĕрĕс-и? Паллах!
Ирпе Хĕвел тухни пушшех те тĕрĕс.
Çук тĕрĕсмарлăх Тĕнчере, çуках!

...Эпир кунта килетпĕр ăнланмашкăн
ЧИ КИРЛИНЕ те ЧИ АНСАТТИНЕ.
Эпир кунта килетпĕр ăнкармашкăн
Пире кунта... ПĔЛМЕ ăсатнине.

*02.01.97*

## ИРĔКЕ – ИРĔКĔМЕ

Эп
санах
саватăп,
Ирĕк!

Сансăр
пурăнма,
Ирĕк,
эп
пултараймастăп!
Пурăнмастăп та!

Эп
санах
мухтатăп,
Ирĕк!

Эс
пурри кăна
маншăн
Пурнăç та,
Телей те...
Эс
пурри кăна!..

...Эп...
сана
курасшăн,
Ирĕк!..
Ирĕкĕм,
сана...

*25.10.97*

* * *

«Мана никам та шеллемест».
*КАЛАÇУРАН*

М а н а шеллеççĕ-им?!
Мана та шеллемеççĕ.
Тĕрĕссипе, мана
Пушшех те шеллемеççĕ!

Эп канлĕ пурăнма
Пĕрисене памастăп.
Эп яланах такам
Ури çине пусатăп.

В ĕ с е м ЁНЕРХИНЕ
Каçса кайса мухтаççĕ.
Э п йыхăрап пĕрмай:
«Мал еннеллех утасчĕ!».

Вĕсем, тен, тепĕр чух
Тем пек ман пек пуласшăн.
Анчах та вĕсене
П а м а н ман пек пулмашкăн.

Ăçтан вĕсем мана
Ăнланччăр та шеллеччĕр?..
Ăçтан вĕсем мана
«Маттур эс, тусăм!» — теччĕр?..

Тĕлĕнмелле — анчах
Э п в ĕ с е н е шеллетĕп!..
Вĕсем те кирлĕ-çке...
Вĕсемсĕр эп... пĕтетĕп!

*05.12.98*

## ЙĂЛТАХ ЙĔРКЕЛЛĔ?..
## ЙĂЛТАХ ЙĔРКЕЛЛĔ!..

Ан пăшăрхан, Туркай — йăлтах йĕркеллĕ!
Суранусем сураççĕ?.. Сурччăрах!
Айван эс пулнă, çавăнпа аманнă.
Апла шăлна çыртсам та — чăт, чăтах!

Айван эс пулнă, çавăнпа çухатнă
Ку таранччен çухатнине — йăлтах.
Пуçна, ав, кĕмĕл тĕс те иленесшĕн...
Эс çеç, ачам, айван-ха çав-çавах!

Пуçна, ав, кĕмĕл тĕс те иленесшĕн...
Чăтас пулать, тӳсес пулать, Туркай!
Тур çырнинчен эс пурĕпĕр иртеймĕн.
Сан пеккисем Ун Çĕр çинче нумай.

Тур çырнинчен эс пурĕпĕр иртеймĕн.
Санран, тăванăм, нимĕн те килмест!
Ак эсĕ халь çĕртен вак чул çĕклесшĕн...
Турри çырман та — чул та çĕкленмест.

Е, калăпăр, эс халь кăвайт чĕртесшĕн —
Йĕпхӳ тăкан сив пĕлĕт айĕнче...
Турри çырман та — хĕмленмест Вут Куçĕ.
Турри çырсан — тиветчĕ çиййĕнчех.

Ан пăшăрхан, Туркай — йăлтах йĕркеллĕ!
Йĕркесĕрри те йĕркеллех, Туркай!

*13.10.97*

* * *

Нумай-и
кирлĕ
этеме?..
Ик ыр сăмах илтсессĕн,
этем тени
вĕçсе çӳрет.
Ик ыр сăмах илтсессĕн.

Нумай-и
кирлĕ
этеме?..
Хăй к и р л и н е туйсассăн,
этем
ырми-канми ĕçлет.
Хăй к и р л и н е туйсассăн.

Нумай-и
кирлĕ этеме?..

*16.01.99*

* * *

Ытла та хаклă-çке Эс, Ирĕк,
ытла та хаклă.
Эс пур çĕрте те пур пек, Ирĕк.
Эс çук ниçта та.
Сана шыратăп-çке эп, Ирĕк,
Сана шыратăп.
Тупатăп та сана, каллех
эп çухататăп.

Ытла та хаклă-çке Эс, Ирĕк,
ытла та хаклă.
Эс пур çĕрте те пур пек, Ирĕк.
Эс çук ниçта та.
Эс çук çĕрте эп Сан патна
васкатăп, Ирĕк.
Эс пур çĕрте эп, нишлĕскер,
Санран таратăп.

. . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ытла та хаклă-çке Эс, Ирĕк,
ытла та хаклă.

*13.12.96*

## АРИСТАРХА

Пĕр ăслă çын мана паян каларĕ:
«Çитет сана чунна ыраттарса,
Çитет сана утмашкăн çиле хирĕç,
Çитет сана такамшăн тар тăкса!

Пурне те эсваскатăн пулăшмашкăн.
Пурне те тăрăшатăн ăнланма.
Хăвна вара пачах та ăнланмаççĕ,
Хăвна пит васкамаççĕ тав тума.

Хĕвел анни санран килмест пулсассăн,
Хĕвел тухни те килес çук санран.
Кампа эс кĕрешетĕн?.. Тĕнчепе-и?
Тĕнче санран, каçар та, вăйлăрах!

Çитет сана çын хыççăн танккамашкăн
Такам таçта талпăнакан çĕре!
Мĕн пуррипе çырлах та пурăн хăвшăн!
Эс тĕнчене юсаймăн пурпĕрех!».

Пĕр ăслă çын мана паян каларĕ...
Тен, тĕрĕсех каларĕ-тĕр çав çын...

*15.09.98*

* * *

Арапуç.
Мунча.
Тултармăш.
Аншарли —
чуна уçма.
«Пурнăç йывăр!» — теççĕ пурте.
Эп калатăп: «Тĕрĕс мар!».

Эп калатăп:
«Пурнăç лайăх!».
Ма тесессĕн,
манăн пур —
Арапуç.
Мунча.
Тултармăш.
Аншарли —
чуна уçма!

*07.12.98*

* * *

Ĕçлесех текеншĕн
Ĕç тупăнатех вăл.
Юлхавпа кахалшăн
Тупăнать с ă л т а в.
Санăн ĕç нумай-и?..
Савăн эсĕ куншăн!
Эс кала: «Парсамăр
Ĕç мана татах!»

Ĕç çукки — инкек вăл!
Ĕççĕрлĕх — инкек вăл!..
Ĕççĕрлĕх вăл ... нĕрсĕр,
Тĕпсĕр шурлăх пек.
Кам ĕçлет — çав тĕрĕс!
Кам ĕçлет — çав чĕрĕ!..
Эпĕ — чĕррисемшĕн,
Эп — чĕррисемпе!

*02.07.98*

## АВТОР

Тщетно, художник, ты мнишь,
что творений своих ты создатель!
*А. К. ТОЛСТОЙ*

Çырмалла — анчах та çыраймастăп.
Ма тесессĕн, эпĕ... х а т ĕ р  м а р.
Ма тесен, чуна тивмен-ха Çиçĕм.
Ма тесен, чуна ӳкмен Кăвар.

Çырмалла.
Анчах та — çыраймастăп.
Ма тесессĕн АВТОРĔ эп мар.

*01.03.98*

* * *

Пулаççĕ нимĕнпе те палăрман кунсем.
Пулаççĕ нимĕнпе те палăрман каççем...

Пулсаччĕ-ши вĕсем, пулманччĕ-ши?..
Вĕсем пĕр йĕр те хăварман сан асунта,
Вĕсем пулман та тейĕн сан пурнăçунта.

Пулаççĕ... сан чунна, сан чĕрÿне
Тĕпрен кисретнĕ кунсемпе каççем.
Вĕсем сан асунта — ĕмĕрлĕхе.
Вĕсем санпа пĕрле — ĕмĕрлĕхе.

ПАЯН юлмарĕ асăмра нимпе те,
Юлмарĕ КĔÇĔР асăмра нимпе те —
Юлмарĕ ПУРНĂÇ асăмра нимпе те.

*05.12.98*

## ТĔРĔССИ

Эп
тунă
ырă
ĕçсене
хуплаймĕ
Вăхăтăн тусанĕ.
Эп
тунă
ырă
ĕçсемпе
мăнук
тивĕçлипе мухтанĕ.

Эп
тунă
ырă
ĕçсене,
тунмастăп эп,
чăнах
эп
тунă.

*1998*

* * *

Куçăма уçатăп —
 Çутăра пулмашкăн.
Куçăма хупатăп —
 тĕттĕмре пулма.

Юррăма пуçлатăп —
 Халăхпа пулмашкăн.
Юррăма юрлатăп —
 Халăхра юлма.

*08.11.97*

## САВӐНӐҪЛӐ СӐВӐ

*А. Г. Хитрова*

Ку сӑвва калана чухне
сӑвӑ калаканӑн аллинче
тулли курка пулсан аван.

*АВТОР*

Хурланса ҫитет!.. Паян
Савӑнасшӑн эп!
Тусӑмсем, сире чунтан
Юратасшӑн эп!

Хурланса ҫитет!.. Усси
Ҫук хурланнинчен.
Пурпӗрех май ҫук тарма
Турӑ ҫырнинчен.

Пурӑнатпӑр-ха, туссем!
Пурӑнатпӑр-ха!
Ҫилӗ хирӗҫ вӗрнипех
Хуҫӑлмастпӑр-ха!

Савӑнса пурӑнмалла!
Савӑнса, туссем!
Турӑ панӑ кунӗсем
Шутлӑ-ҫке, туссем!

Юратса пурӑнмалла!
Юратса, туссем!
Пӗтӗм Пурнӑҫ Юрату
Пултӑрччӗ, туссем!

Юратса пурӑнмалла!
Юратса кӑна!
Тусӑмсем, эпир кунта
Хӑнара кӑна.

Хурланса ҫитет! Паян
Савӑнасшӑн эп.
Ҫак ятпа... ҫак алтӑра
Пушатасшӑн эп!

*02.11.96*

## ПУРНĂÇ

**Роман**

Ĕмĕр иртет, кун юлать
*ЮРĂРАН*

...Вăт çапла эпир пурнатпăр —
Вăрансассăн, пит çăватпăр,
Пит çусан, апатланатпăр,
Тĕкĕр умĕнче тăратпăр,
Тумланса килтен тухатпăр,
Уçă сывлăшпа сывлатпăр,
Ăмăртса ĕçе васкатпăр,
Ĕç тесен, каçсах каятпăр,
Каллĕ-маллĕ чупкалатпăр,
Пуçлăх хушнине тăватпăр,
Ыйтусем татса паратпăр,
Ĕç ăнсассăн савăнатпăр,
Ăнмасассăн хурланатпăр,
Вак-тĕвекшĕн тарăхатпăр,
Пĕр-пĕрне ура хуратпăр,
Юлташран тăшман тăватпăр,
Тăшманра юлташ куратпăр,
Ĕç укçи кĕтсе ларатпăр,
Кунçулăмăра ятлатпăр,
Пуç çинчи çÿçе çăлатпăр,
Кăштахран йăлтах манатпăр,
Шухăша хăш чух путатпăр,
Кăнтăрла апатланатпăр,
Апатра кăштах канатпăр,
Апатран ĕçе утатпăр,
Сар хĕвелшĕн савăнатпăр,
Çумăртан-мĕнрен таратпăр,
Хамăр хамăртан кулатпăр,
Ĕçлемешкĕн пуçăнатпăр,
Каллĕ-маллĕ чупкалатпăр,
Пуçлăх хушнине тăватпăр,
Ыйтусем татса паратпăр,
Ĕç ăнсассăн савăнатпăр,
Ăнмасассăн хурланатпăр,
Вак-тĕвекшĕн тарăхатпăр,
Чи кирли пирки манатпăр,

Кун каҫа халран каятпăр,
Сехетсем ҫине пăхатпăр,
Шухăшпа киле васкатпăр,
Аранах ёҫрен тухатпăр,
Тĕрлĕ транспорта тулатпăр,
Тепĕр чух ҫурран утатпăр,
Лавккана кĕрсе тухатпăр,
Сĕтпе ҫăкăр туянатпăр,
Хваттере уҫса яратпăр,
Люстра таврашне ҫутатпăр,
Аллăмăрсене ҫăватпăр,
Кухньăра чакаланатпăр,
Килйышпа апатланатпăр,
Май пур чух кăштах сыпатпăр,
Хăш чухне хăна пухатпăр,
Хамăр хăнана каятпăр,
Телевизор куркалатпăр,
Ҫывăрма унтан выртатпăр...

Вăт ҫапла эпир пурнатпăр.
Начар мар эпир пурнатпăр.

*06.04.98*

## СĂВĂСЕМ

Сăвăсем вĕсем — ҫынсем пекех —
Пурăнасшăн — пурăннă чухне.
Сăвăсен те туясси килет
Хăйсене чунтан юратнине.

Сăвăсем вĕсем — ҫынсем пекех —
Савăнаҫҫĕ — савăннă чухне,
Хурланаҫҫĕ — тивнĕ чух илтме
Хăйсене юри хурланине.

Сăвăсен те вĕҫесси килет —
Ҫĕкленсе хĕвеллĕ тӳпене.
Сăвăсен те курасси килет
Вĕҫсĕр-хĕрсĕр ҫутă тĕнчене.

Сăвăсен те пуласси килет
Кирлĕрен те кирлĕ ҫынсене...
Сăвăсем вĕсем — ҫынсем пекех —
Ăнсăртран килмеҫҫĕ тĕнчене.

Сăвăсем вĕсем — ҫынсем пекех —
Ăнсăртран килмеҫҫĕ тĕнчене.

*01.07.98*

## ЯВАПЛĂХ

Каларăм,
калатăп,
татах та эп калăп...
Мана
Турă
янă
Сăмах
калама.
Мана
Турă
янă
Çынна
юратмашкăн.
Мана
Турă
янă
Йыхравçă
пулма.

Эп
шаннă,
шанатăп,
татах та
эп шанăп:
Ырри
усалран
вăйлăрах!
Мана
Турă
янă
ç а к н а
каламашкăн.
Эп хам та
пурнатăп
ç а к н а
шаннăран!

*16.01.99*

## ПУРНĂÇĂМ-ПУРНĂÇ

*Л. Шаповаловăна*

Малтанах — ансатчĕ.
Халь — ансат та мар...
Пурпĕрех, туссемĕр,
Лайăх — пурăнма.

Лайăх — юратмашкăн.
Лайăх — юратсан,
«Юратап!» темешкĕн,
Ăшшăн йăл кулса.

Йăнăшма та — лайăх.
Лайăх — йăнăшсан,
Каçару ыйтмашкăн,
Айăпна туйса.

Лайăх — çиле хирĕç
Талпăнса утма.
Пуринчен те лайăх —
Савăнса кулма.

Малтанах — ансатчĕ.
Халь — ансат та мар...
Пурпĕрех, туссемĕр,
Лайăх — пурăнма!

*04.03.99*

## ТУПМАЛЛИ


«Ҫӗнӗ ӗмӗр!» . . . . . 5
Каҫкӳлӗм. Виҫҫӗн . . . . . 6
Ман ытарма ҫук ырă та маттур чăвашăмсене . . . . . 8
Вăйлисем... Вăйлисемшӗн! . . . . . 10
Эпир — чăвашсем... . . . . . 11
Чăваш Енӗн ертӳҫисене . . . . . 12
Сасă . . . . . 14
Асаилӳ . . . . . 15
Иккӗмӗш Микулай патшана тата унăн ҫывăх ҫыннисене Питӗрте пытарнине курнă хыҫҫăн (1998 ҫулхи июлӗн 17-мӗшӗ) ҫырнă сăвă . . . . . 17
Ҫав Улăпсем пуртан. . . . . 18
Атнер Хусанкая . . . . . 20
Хырай Енелтен Шупашкара таврăннă чух Ҫӗрпӳ хули тӗлӗнче ҫырнă сăвă . . . . . 21
Ҫавраҫил-98 . . . . . 22
Халăх . . . . . 23
Ятсăр сăвă . . . . . 24
Раҫҫее . . . . . 25
Тăвăл умӗн . . . . . 26
Раҫҫей-98: чухăнсен юрри . . . . . 27
Карапсем . . . . . 28
К. М. А. . . . . . 29
«Эп Ҫутă илсе килнӗччӗ» . . . . . 30
Мӗтри Юмана . . . . . 31
«Хамăрăннисемех-ҫке-ха!..» . . . . . 33
«Пăтранать Чăваш Тӗнчи, пăтранать» . . . . . 34
Истори Сучӗ умӗнче . . . . . 35
Вăхăт ҫитрӗ! . . . . . 37
«Пурнăҫ мар — абсурд театрӗ!..» . . . . . 38
Тӗрӗслев . . . . . 39
«Шырах, шыра Идеална, Поэт!» . . . . . 40
Тавлашу . . . . . 41
1996 ҫулхи ҫуркунне Парижа ҫитсе курнă хыҫҫăн ҫырнă сăвă . . . . . 43
«Тытап та каятăп Йошкар-Олана!» . . . . . 45
«Муркашра тахҫанах эп пулманччӗ» . . . . . 46
Сăвăҫ . . . . . 47
Эп . . . . . 48
Чăрсăрлăх . . . . . 49
Иосиф Дмитриева . . . . . 50
Арҫука . . . . . 51
Эсир вара? . . . . . 52
«Телей те, Айăп та — пӗрле» . . . . . 53
Хурав . . . . . 54
Эп пур та . . . . . 55
Хальхи ҫӗрме пуянсенчен пӗрне . . . . . 56
Иуда . . . . . 57
Ыратăвăмăн виҫӗ сăвви . . . . . 58

Чунри .60
Эпиграмма вырӑнне .61
Куҫҫуль .62
Паттӑрсем .63
Пӗлесчӗ .64
«Ҫӗнтертӗмӗр!» — терӗр пулас...» .65
Пӗрне... .66
«Ҫак тӗнчере пур пӗр масар» .67
«Ҫухатрӑм» .68
Сӑлтав .69
Виталий Филиппова .70
«Ҫӗкле пуҫна, ҫӗкле пуҫна, юлташӑм!» .71
Владимир Суркова .72
Вячеслав Христофорова .73
Иван Петрович Таратина — акатуйсемпе сабантуйсен паттӑрне — юлташла .74
Кӗреке сӑвви .75
Ресторанта .76
Кану .77
Михаил Яковлева .78
Кӗркунне. Арапуҫ .79
«Ӳпкелешмесӗр, шӑппӑн кайрӗ ман тусӑм чӑн ҫӗре» .80
Унта .81
Дискотека: ухмаха тухнӑ каҫ .82
«Эп паллатӑп та...» .83
«Пӗлсе пӗтер хӗрарӑм чӗрине» .84
«Эс калатӑн: «Ӑнсӑртран!..» .85
«Эп хам та айӑплӑ, паллах...» .86
«Ҫулсем пирки, тархасшӑн, калаҫмастпӑр» .87
«Ан имен!..» .88
«Эп те пулнӑ-ши вара пӗчӗккӗ тахҫан?» .89
Мӗнрен пуҫланать юрату? .90
Тен .91
«Сана чӑнах та лайӑх-и?» .92
«Тек ан кӗт мана, ан кӗт!» .93
«Эп сана тахҫан курсаччӗ» .94
Пурпӗрех .95
Телейӗме... .96
«Епле калас-ха ман сана» .97
«Эп сана ӑнлантӑм-ха» .98
«Мӗн чухлӗ ырату сан куҫунта!..» .99
Пӗррехинче .100
«Сана куриччен ех» .101
Юр... Юрату... Юрӑ .102
Вӑрттӑнлӑх .103
«Эпир санпа паллашнӑ, пӗлетӗн-и, хӑҫан?..» .104
«Тем, паян кичем эс, ман хӗвелӗм...» .105
Телей ҫинчен — кӗскен, чӑтма ҫук кӗскен .106
Сӗнӳ .107
«Эп туйнинех туятӑн эсӗ» .108
Чӗре .109

«Юратман пулсан» . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 110
«Эс илемлĕ пулма тăрăшмастăн» . . . . . . . . . . . . . . . . . . 111
«Малашне сан пулĕ эп»... . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 112
«Эс ман валли çуралнă пулнă» . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 113
«Килĕшетĕн те, килĕшместĕн те...» . . . . . . . . . . . . . . . 114
Сывпуллашу . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 115
Пĕлĕшĕме . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 116
Куçсем. Куçа-куçăн . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 117
«Халех! Е тек нихçан та!» . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 118
Таксири калаçу . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 119
«Çинçе эс» . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 120
«Эс манран телейлĕрех!..» . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 121
«Ансаттине ан кăткăслат, тархасшăн!» . . . . . . . . . . . . 122
«Саншăн мĕн паха?..» . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 123
Арçынсен сăвви . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 124
«Юрлать эстрада çăлтăрĕ» . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 125
Вырсарникун: канлĕх . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 126
«Ай, паян аван çанталăк!» . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 127
Эп паян . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 128
Аю-Даг . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 129
Иккĕленӳ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 131
«Кӳренме, паллах, ансат» . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 132
«Ан ăмсан, ан кĕвĕç, ан тирке...» . . . . . . . . . . . . . . . . 133
«Айван та пулнă, пулнă çăмăлттай та» . . . . . . . . . . . . 134
«Пĕтĕмпех — «Юратьпе» «Юрамасть» хушшинче» . . . . . . . . . 135
Кĕпер . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 136
Уяв иртсен . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 137
«Атя-ха, тăванăм, ларса калаçар...» . . . . . . . . . . . . . . 138
Тусăмсене . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 139
«Епле ансат анаталла анма!..» . . . . . . . . . . . . . . . . . . 140
Лайăх хурав . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 141
Патша мыскари е шаннă кайăк йăвара пулманни,
шел пулин те, ырри патне илсе çитермест . . . . . . . . . 142
Тĕрĕс мар сăвă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 143
Тӳпе: Çăлтăрсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 144
Йĕрке . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 145
Çапла мар-и-ха? . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 146
Ман пурнăçăм . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 147
Кăвайт умĕнче... . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 148
Чи пахи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 150
Хăравçă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 151
«Пурăнмаллах пуль çав, пурăнмаллах пуль» . . . . . . . . . 152
Мда . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 153
Турăш . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 154
Титаник . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 155
Чăнлăх . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 156
«Ытла хаваслă пултăм çав» . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 157
Ăнăçу . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 158
Укçа . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 159
Ирĕклĕх . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 160
Юман . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 161

Валери Туркай 1996 çулхи юпа уйăхĕн вĕçĕнче.......... 162
Чи кирли.......... 163
Кӳренӳ.......... 164
Тусăмсене.......... 165
«Ытла та хăвăрт тĕттĕмленчĕ».......... 166
«Кур-ха, кур: Хĕвел тухать!».......... 167
«Эп нимшĕн те тек ӳкĕнместĕп!».......... 168
Ирĕке — Ирĕкĕме.......... 169
«Мана шеллеççĕ-им!».......... 170
Йăлтах йĕркеллĕ? Йăлтах йĕркеллĕ!.......... 171
«Нумай-и кирлĕ этеме?».......... 172
«Ытла та хаклă-çке эс, Ирĕк!..».......... 173
Аристарха.......... 174
«Арапуç».......... 175
«Ĕçлесех текеншĕн ĕç тупăнатех вăл».......... 176
Автор.......... 177
«Пулаççĕ нимĕнпе те палăрман кунсем».......... 178
Тĕрĕсси.......... 179
«Куçăма уçатăп».......... 180
Савăнăçлă сăвă.......... 181
Пурнăç.......... 182
Сăвăсем.......... 184
Яваплăх.......... 185
Пурнăçăм-Пурнăç.......... 186

Литературно-художественное издание

**Валери ТУРКАЙ**

**ПУРНАТПĂР-ХА!**

**Сăвăсем**

Технический редактор *Э. В. Исаева*

Лицензия ЛР № 040807 от 10.04.97.

Сдано в набор 11.01.99. Подписано в печать 09.03.99. Бумага офсетная. Формат 84х108[1]/[32]. Гарнитура Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 10,08. Уч.-изд. л. 4,92. Тираж 3000 экз. Заказ № К-1503. Цена свободная.

428019, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
Типография издательства «Чувашия».

20=00